им. М. Горького
№

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Август 1 ШĂМАТКУН № 149 (9058)

36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Корейăра перемири пирки алă пуснă май Ким Ир Сен юлташ Г. М. Маленков юлташ патне янă телеграмма (1 стр.).
Корейăра перемири пирки алă пуснă май Ли Дон Ген юлташ В. М. Молотов юлташ патне янă телеграмма (1 стр.).
Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ аллă çул тултарнă ятпа. Мускав хулинчи парторганизаци активĕн пухăвĕ (1 стр.).
Совет халăхĕ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарнине паллă тăвать (1 стр.).
Шупашкар хулинчи парти активĕн пухăвĕ (2 стр.).
Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарнă ятпа килнĕ саламсем (2 стр.).
Австрипе государство договорĕ тăвас ыйту пирки (2 стр.).
СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствинче (2 стр.).
Комбайнсемпе тата ытти машинăсемпе сменăри нормăна ытлашшипех тултарса ĕçлер! (3 стр.).
ФЕЛЬЕТОН. И. Пушкин. — Урамри канашлу (3 стр.).
Ким Ир Сен маршала Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Геройĕ ятне панă (4 стр.).

Колхозсен пĕрремĕш тивĕçĕ

Партипе правительство социализмла ялхуçалăхне аталантарас енĕпе колхозсене пысăк пулăшу параççĕ. Республикăра халĕ чаплă та вăйлă машинăсем: тракторсем, комбайнсем, молотилкăсем нумай. МТС-сенче пуçарулă та опытлă механизаторсен шучĕ ÿссе пырать. Çакă ĕнтĕ социализмла ялхуçалăхĕнчи ĕçсене вăхăтра, пысăк пахалăхпа туса ирттерме май парать, колхозсен обществăлла хуçалăхне вăйлатса, çирĕплетсе пымалли условисенчен пĕри пулса тăрать. Вăйлă техникăпа туллин усă курса, вăйпитти колхозниксене пурне те ĕçе хутшăнтарса тырпула кĕске срокра тăккаламасăр пухса кĕртесси, государствăна тырă вăхăтра парса татасси — колхозсемпе МТС-сем умĕнче тăракан тĕп задача.

Республикăри колхозсемпе совхозсен уй-хирĕсенче халĕ хĕрÿ ĕçсем пыраççĕ: ялхуçалăх ĕçченĕсем кĕрхи тырăсене выраççĕ, авăн çапаççĕ, хăшпĕр çĕрте çуртрисене вырма тытăнчĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем, механизаторсем тырпул пухса кĕртме тытăнсан малтанхи кунсенченех хăйсен ĕçри çĕкленĕвне кăтартаççĕ. Советски районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхоз членĕсем нумайăшĕ ыраш вырнă çĕрте кулленхи нормăна 130—140 процент тултарса ĕçленĕ. О. Васильева механизатор комбайнпа кулленхи нормăна ытлашшипех тултарса пынă.

Чкаловски МТС-ĕнчи Ф. Абитов комбайнер «Гвардеец» колхозра самоходнăй комбайнпа мĕн ĕçе тытăннăранпах кашни кун 8 гектар вырăнне 10—12 гектар ыраш вырса çапать.

Малта пыракан колхозсем тырă вырма тухнă хыççăн 3—4 кунтанах государствăна тырă пама тытăнчĕç. Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз июльти пилĕккунлăхсен графикне ытлашшипех тултарнă.

Çав вăхăтрах хăшпĕр районсемпе колхозсенче тырпул пухса кĕртес ĕç вăраха кайса пырать-ха. Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев органĕсем уй-хирти ĕçсене оперативлă тата конкретлă ертсе пымаççĕ. Уйрăм районсенче машинăсемпе пачах усă курмаççĕ. Сĕрпÿ районĕнче пирвайхи пилĕк кун хушшинче районĕпе 922 гектар ыраш вырнă пулсан, комбайнсемпе мĕн пурĕ те 75 гектар кăна вырса çапнă. Ку вăл Сĕрпÿ МТС-ĕн руководителĕсем комбайнсене вăхăтра лайăх юсама, кадрсен квалификацине ÿстерме çине тăрса тăрăшманнине кăтартать.

Кĕрхи тырăсем вăйлă çитĕнчĕç. Ыраш пучахĕ шултра, пĕрчисем тулта тăраççĕ, вырма кăшт тăхтасанах тăкăнма тапратать. Çакă ĕнтĕ комбайнсене, жнейкăсене пурне те ĕçе ярса, вĕсемпе туллин усă курса тырпула кĕске срокра пухса кĕртмелли çинчен калать. Хăвăрт вырса пухнипе пĕрлех, авăн çапассине те çийĕнчех организацилесе государствăна тырă парас ĕçе хĕрÿллĕн туса пыма тытăнмалла.

«Тĕп задачăран ан пăрăнăр, тырпул пухса кĕртме тухсан малтанхи кунсенчех тырă хатĕрлес ĕçе сарса вăйлатса пырăр, мĕншĕн тесен тырă хатĕрлес ĕç вăл—пĕрремĕш тивĕç», тесе вĕрентнĕ И. В. Сталин. Çакна колхозсемпе МТС-сен, ялхуçалăхĕпе хатĕрлев органĕсен руководителĕсем яланах асра тытса тăма тивĕç.

Республикăра тырпул пухса кĕртес ĕçе ăнăçлăн туса ирттерме, государствăна вăхăтра тырă парса татма пур майсем те çителĕклĕ. Ялхуçалăхĕнчи ĕçсене анлăн механизацилени — комбайнсемпе тырă вырса çапни, тырра механизациленĕ итемсенче сăвăрса тасатни, нÿрĕ тырра зерносушилкăсенче типĕтни—çаксем вĕсем итемсенче пухăнакан тырра çийĕнчех хатĕрлев пункчĕсене леçсе тăма май паракан условисем пулса тăраççĕ.

Анчах тырпула пухса кĕртес ĕçре чылай колхозсенче ку тарана çитсе те черетлĕх пĕтмен. Сĕрпÿ районĕнчи «Цивильстрой» колхозра тырă вырма тухнăранпа 8—9 кун иртнĕ пулсан та, авăн çапма халĕ те тытăнман. Колхоз руководителĕсем (председателĕ И. Иванов юлташ) тырă вырса пĕтерсен тин авăн çапма шутлаççĕ. Ĕçе çапла организацилени вăл государствăна тырă вăхăтра парассине чарнипе пĕрлех, вăрлăх хатĕрлеме те, колхозниксене ĕçкунĕшĕн аванс шучĕпе тырă парассине те чарса тăрать.

Тырпул пухса кĕртессипе государствăна тырă парасси хăвăрт туса ирттермелли ĕç. Партипе совет органĕсен, колхозсемпе МТС руководителĕсен çак ĕçе куллен ертсе пымалла. Тырпула пухса кĕртнĕ чухне ĕç пахалăхĕпе хăвăртлăхĕ çине тимлĕ пăхмалла. Ĕçе мĕнле тунине вĕçĕмсĕр тĕрĕслесе тăни çитменлĕхсене, йăнăшсене çийĕнчех сирсе яма, малалла ăнăçлă ĕçлеме пулăшать.

Парти организацийĕсен задачи—çак вăхăтра политикăлла-массăлла ĕçе лайăх йĕркелесе, ăна бригадăсене, итем çине куçарасси. Колхозниксен массине государство интересĕшĕн тăрăшма вĕрентмелле, колхозниксен пĕрремĕш тивĕçне—государствăна тырă вăхăтра памаллине пурнăçлассишĕн кĕрешме мобилизацилемелле. Бригадăсем, механизаторсем, колхозниксемпе колхозницăсем хушшинчи социализмла ăмăртăва аталантарса пымалла. Коммунистсемпе комсомолецсем хăйсен хастарлă ĕçĕпе паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ, ку вăл колхозниксемпе колхозницăсене хавхаланса ĕçлеме пулăшать. Кашни коммунистăн, комсомолецăн ĕçре малта, пуçарулă тата пултарулă пулмалла.

Государствăна вăхăтра тырă парса татасси хатĕрлев пункчĕсене тырă леçессине тĕрĕс организацилениччен нумай килет. Иртнĕ çулта хăшпĕр колхозсен итемĕсем çинче тырра сăвăрса тасатассине кирлĕ пек йĕркелемен, çапнă тырра купара нумайччен выртарнă пулнă. Кун пек çитменлĕхсем кăçал пулмалла мар. Çапнă тырра çийĕнчех тасатса хатĕрлев пунктне леçмелле тăвас пулать. Ку тĕлĕшпе транспорт бригади пысăк вырăн йышăнса тăрать. Бригадăна ертсе пыма хастарлă та шанчăклă колхозника хушни тырă леçессине хăвăртлатса, вăхăтра туса пыма пулăшать.

Кашни колхозăн кашни кунах хатĕрлев пунктне тырă леçме государство панă плана тултаричченех хутшăнмалла. Районти партипе совет органĕсен юлса пыракан колхозсене пулăшма мерăсем йышăнмалла. Государствăна массăллăн тырă панă вăхăтра хатĕрлев пункчĕсем çаврăнăçуллă ĕçлени питĕ кирлĕ. Вĕсен колхозсенчен тырă пырса тăнă вăхăтра сехет механизмĕ пек тĕрĕс ĕçлемелле. Илсе пынă тырра тĕрĕсленĕ çĕрте, тырă пушатнă çĕрте колхозниксем черет кĕтсе тăни ниçта та ан пултăр.

Пирĕн республикăри ĕççыннисем Мордва тата Мари республикисенчи ялхуçалăх ĕçченĕсемпе социализмла ăмăртăва тухса, кăçал пысăк тухăçлă тырпул туса илме, государствăна тырă памалли плана октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма сăмах пачĕç. Халĕ ĕнтĕ çак ăмăртăвăн чи ответлă тапхăрĕ пырать.

Республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, механизаторсем, ялхуçалăх специалисчĕсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешеççĕ. Чылай колхозсем хăйсен пĕрремĕш тивĕçне срокчен пурнăçлассишĕн тăрăшаççĕ. Парти, совет, ялхуçалăхĕпе хатĕрлев организацийĕсен задачи колхоз ĕçченĕсене хăйсен обязательствисене срокчен пурнăçлама пулăшасси пулать.

Стройка патне пымалли çулсем çинче

КУЙБЫШЕВ. (ТАСС). Куйбышев гидроэлектростанцийĕн строительство площадкисем патне икĕ енчен те чугун çулсем пыраççĕ. Çĕнĕ çулсем çинче хăшпĕр çĕрте станцисен çурчĕсене лартмăн-ха, анчах çулсем тăрăх поездсем тăтăшах çÿреççĕ. Сызраньрен грузсем Жигулевска каяççĕ, унта—Атăлăн сылтăм çыранĕнче гидроэлектростанци лартма чавнă пысăк котлован сарăласа выртать. Куйбышевран поездсем Атăлăн сулахай енчи строительство районĕсене пыраççĕ, унта гидроузелăн пăрахутсем çÿремелли системине тăваççĕ, шыва хухтармалли пĕве тума площадка хатĕрлеççĕ.

Çĕнĕ чугун çулсем çинче ĕçлекенсем Пĕтĕм Союзри чугун çул работникĕсен кунĕ ячĕпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсем строительсем патне грузсене хăвăрт илсе пырассишĕн кĕрешеççĕ. Аслă машинист Чесноков йывăр тиенĕ 21 поезда стройкăна илсе пынă. Вăл планран ирттерсе стройкăна 7.700 тонна груз турттарса пынă. Машинистсем Крухмалев, Калганов, Табаков юлташсем тата ыттисем те стройкăна йывăр тиенĕ вуншар поезд илсе пыма ĕлкĕрнĕ.

Чугун çул çинчи строительсем те ăмăртăва хутшăннă. Строительсем малтан гидроузел патне пымалли çулсене тунă, халĕ стройка территорийĕнчи çулсене тăваççĕ. Коростель юлташ ертсе пыракан бригада çулталăкри задание çывăх вăхăтра пĕтĕмпех пурнăçлать. Вăл экскаваторпа пĕве тума купаламалли вырăна 90 пин кубометр çĕр чавса кăларнă.

Тĕп магистральсен юлашки станцийĕсенчен пуçласа—Атăлăн сылтăм енче Жигулевски станцийĕнчен пуçласа, сулахай енче Жигули тинĕсĕ станцийĕнчен пуçласа—гидроузелăн строительство участокĕсем патнелле çул юпписем нумай каяççĕ. Чугун çул работникĕсен кунĕ тĕлне хăйăр илмелли карьер патне пымалли çула туса пĕтерсе ĕçе яраççĕ. Халĕ строительсем çул карьерĕ патне тата шыва хухтармалли пĕве тунă çĕре пыракан чугун çулсене хываççĕ. Гидроэлектростанци котлованĕ патне тата котлована Атăл шывĕнчен хÿтĕлеме тунă перемычка патне каймалли чугун çулсене тума тытăннă. Ку çулсене гидроэлектростанци çуртне тума бетон турттарма тăваççĕ.

МУСКАВ

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председательне

Георгий Максимилианович МАЛЕНКОВ юлташа

Хисеплĕ Председатель юлташ!

Корея халăхĕпе Китай халăх добровольцĕсем юнлă вăрçăра, Америка империалисчĕсем Корея халăхне хирĕç пуçарнă вăрçăра, историллĕ çĕнтерÿ тунă май пирĕн пата хĕрÿллĕ салам янăшăн Сире тата Сирĕн урлă Совет Правительствине, пĕтĕм совет халăхне Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительстви тата пĕтĕм халăх ячĕпе чĕререн тав туни çинчен пĕлтерме ирĕк парсамăр.

Совет халăхĕ тÿрĕ кăмăлпа Корея халăхне питĕ пысăк пулăшу парса тăни тата унăн майлă пулни Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн, Америка агрессорĕсене хирĕç виçĕ çул хушши пынă йывăр вăрçăра пире çĕнтерÿ тума май панă тĕп факторсенчен пĕри пулса тăнине тата Корея халăхĕ перемири пулнă май хăйĕн умне лартнă пысăк задачăсене — хăйĕн Тăван çĕршывне мирлĕ пĕрлештерес, вăрçă аркатса хăварнă халăх хуçалăхне юсас задачăсене ăнăçлă пурнăçлама май паракан шанăç пулса тăнине чун-чĕререн ĕненетĕп.

Корея халăхĕ халĕ хăйĕн Тăван çĕршывне пĕрлештерес тата мирлĕ строительство енĕпе тăракан задачăсене пурнăçлама тытăнчĕ. Совет Правительстви Корея халăхне çав задачăсене пурнăçлама пур майсемпе те пулăшса пыма хатĕр пулни çинчен пĕлтерни пирĕн шанăçа çирĕплетет тата пире хамăр ĕçре малашне çĕнтерÿсем тума хавхалантарать.

Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Министрĕсен Кабинечĕн Председателĕ КИМ ИР СЕН.

Пхеньян, 1953 çулхи июлĕн 29-мĕшĕ.

МУСКАВ

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрне

Вячеслав Михайлович МОЛОТОВ юлташа

Хисеплĕ Министр юлташ, перемири пирки тунă килĕшÿ çине алă пуснă май тата Корейăри вăрçă, Америкăн хĕçпăшаллă агрессорĕсем пуçарнă вăрçă, чарăннă май Эсир пирĕн пата хĕрÿллĕ салам янăшăн Сире чун-чĕререн тав тăватăп.

Аслă совет халăхĕ тата халăх демократи çĕршывĕсенчи тăванла халăхсем Корея халăхне активлă пулăшни тата ун майлă пулни Корея халăхне татăклă çĕнтерÿ тăвасса çирĕппĕн ĕнентерсе тăчĕ тата пирĕн çĕнтерĕвĕн шанчăклă никĕсĕ пулчĕ.

Перемири тунă май хамăрăн Тăван çĕршыва пĕрлĕхлĕ тата никама пăхăнмалла мар çĕршыв туса хурас задачăна ăнăçлă татса парассишĕн кĕрешес тата вăрçă хыççăнхи вăхăтра халăх хуçалăхне юсаса малалла аталантарас ĕçсенче совет халăхĕ тата халăх демократи çĕршывĕсенчи халăхсем пулăшни пире çĕнĕ пысăк çитĕнÿсем тума хавхалантарать тата хамăр çĕнтерессе ĕненсе тăнине çирĕплетет.

Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ ЛИ ДОН ГЕН.

Пхеньян, 1953 çулхи июлĕн 29-мĕшĕ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ аллă çул тултарнă ятпа

Мускав хулинчи парторганизаци активĕн пухăвĕ

Российăри социал-демократиллĕ рабочи партин Иккĕмĕш съезчĕ пулнăранпа аллă çул тултарчĕ. Çак историллĕ съездра рабочи класăн боевой, революцилле марксистла партийĕ, çĕнĕ типлă парти пуçланса кайнă.

Çак чаплă дата ячĕпе июлĕн 30-мĕшĕнче Союзсен çуртĕн Колоннăллă залĕнче Мускав хулинчи парторганизаци активĕн пухăвĕ пулса иртнĕ.

Пухăва КПСС Мускав комитечĕн секретарĕ Михайлов юлташ уçнă.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретарьне П. Н. Поспелов юлташа доклад тума сăмах параççĕ.

Поспелов юлташ çапла калать: совет халăхĕ хăйĕн тăван Коммунистсен партийĕ аллă çул тултарнине—пирĕн парти пурнăçĕнчи, пирĕн çĕршыври халăхсен пурнăçĕнчи, пĕтĕм тĕнчери революциллĕ юхăм историйĕнчи чаплă та мухтавлă датăна—çав тери хавхаланса палăртать. Коммунистсен партийĕ ăслăн тата пĕр хăрамасăр ертсе пынипе пирĕн çĕршывра 1917 çулхи октябрь уйăхĕнче историре питĕ аслă революциллĕ улшăну тунă. Октябрьти Социализмла Аслă революци этемлĕхĕн пĕтĕм тĕнчери историйĕнче çĕнĕ тапхăр, капитализм пĕтмелли, социализмпа коммунизм çĕнтермелли тапхăр пуçласа ячĕ. Халĕ парти членĕсемпе кандидачĕсем çичĕ миллион çынна яхăн шутланаççĕ. Гениллĕ Ленин, Ленинăн ученикĕпе унăн ĕçне малалла туса пынă Сталинпа унăн соратникĕсем ертсе пынипе, пирĕн Коммунистсен партийĕ халĕ коммунизм тăвакан совет обществин ертсе, хавхалантарса пыракан вăйĕ пулса тăрать.

Поспелов юлташ РСДРП-ăн Иккĕмĕш съезчĕн историллĕ пĕлтерĕшĕ çинчен, аслă Ленинăн марксистла парти, çĕнĕ типлă парти тăвас ĕçри пĕлтерĕшĕ çинчен, çур ĕмĕр хушшинче Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ утса тухнă мухтавлă çул çинчен калать.

Прениресе чи малтан партин Советски райкомĕн секретарĕ Марченко юлташ сăмах каланă.

— Кашни коммунист хăйĕн партийĕпе çав тери савăнса мухтанать,—тет вăл. — Ленин туса хунă парти членĕ пулассинчен хисеплĕрех урăх нимĕн те çук. Владимир Ильич РСДРП-ăн Иккĕмĕш съездĕнче кăтартса панисене пурнăçласси—пирĕн парти çирĕплĕхне, чăтăмлăхне, тасалăхне упраса сыхласси, парти членĕн ячĕпе пĕлтерĕшне çÿлерех те çÿлерех çĕклесси коммунистăн чи таса тивĕçĕ пулса тăрать.

КПСС XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене пурнăçласа, Советски районĕнчи парторганизаци марксистла-ленинла теорие пропагандăлас ĕçе вăйлатрĕ. Çапах та ку ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур: чылай семинарсемпе кружоксенче XIX-мĕш съезд решенийĕсене вĕренессине коммунизм строительствин конкретлă задачисемпе тачă çыхăнтармаççĕ, марксизм-ленинизм теорине вĕренесси çине начетникла, догматикла пăхаççĕ. Районта идеологиллĕ ĕçе çÿлĕрех пусăма çĕклес тесе, парти организацийĕ мерăсем йышăнать.

Парти организацийĕсен идеологиллĕ ĕçĕпе çыхăнса тăракан ыйтусем çинчен прение хутшăннă ытти юлташсем те нумай каланă. Партин Мускав хула комитечĕн секретарĕ Фурцева юлташ КПСС XIX-мĕш съезчĕ хыççăн Мускаври парторганизаци идеологиллĕ ĕçе лайăхлатнине палăртнă, çапах та ку ĕç чылай районсенчи парторганизацисемпе пуçламăш организацинче ÿссе пыракан требованисенчен кая юлать. Мускав хулинчи парторганизаци идеологиллĕ ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме тивĕç.

КПСС Центральнăй Комитечĕ çумĕнчи партин Аслă шкулĕн ректорĕ Митронов юлташ тата КПСС Центральнăй Комитечĕ çумĕнчи обществăлла наукăсен Академийĕнчи парторганизаци секретарĕ Николаев юлташ çак вĕренÿ заведенийĕнчи пурнăçран илнĕ тĕслĕхсемпе парти хăйĕн кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлес ĕçе мĕн тери хакланине кăтартса параççĕ. Партин Аслă шкулĕнче тата унта заочно вĕренмелли пайсенче, КПСС Центральнăй Комитечĕ çумĕнчи çулталăклăх ленинла курссенче халĕ партипе советăн ертсе пыракан работникĕсем пиншерĕн вĕренеççĕ.

В. И. Ленинăн Тĕп музейĕн директорĕ Морозов юлташ В. И. Ленин музейĕ пирĕн парти идейисене пропагандăлас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен калать. Музейра яланах халăх йышлă. Юлашки çулсенче музея çулталăкне пĕр миллион яхăн çын пырса курать. Унта пыракансем çырса хăварнă сăмахсем совет халăхĕ хăйĕн Коммунистсен партине вĕçĕмсĕр юратни çинчен калаççĕ.

РСДРП-ăн Иккĕмĕш съезчĕ пулнăранпа аллă çул тултарнине палăртма хатĕрленнĕ кунсенче заводсен, фабрикăсемпе учрежденийĕсен коллективĕсем пысăк çĕкленÿпе ĕçлени çинчен партин Краснопресненски райкомĕн секретарĕ Безруков юлташ, комбинат директорĕ Соловьев юлташ тата ыттисем те каланă.

Пренире 10 çын тухса каланă.

Пĕр шухăш-кăмăллă пулса йышăннă решенире парти активĕн пухăвĕ КПСС Центральнăй Комитетне Мускаври парторганизаци тата столицăри мĕнпур ĕççыннисем хăйсен пĕтĕм вăйĕсемпе Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн тăрăшĕç, тесе шантарнă.

Актив пухăвĕ парти гимне «Интернационал» юрланипе вĕçленнĕ. (ТАСС).

Парти тавра тата тачăрах пĕтĕçеççĕ

МУРКАШ. Районти ĕççыннисем Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ аллă çул тултарнă куна пысăк хавхаланупа кĕтсе илчĕç. Вĕсем Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Пропагандăпа агитаци пайĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ çумĕнчи Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин институчĕн «Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарчĕ (1903—1953)» ятлă тезисĕсемпе хытă интересленеççĕ. Çак паллă документа предприятисемпе колхозсенче ушкăнăн-ушкăнăн вулаççĕ. Ялти агитаторсем совет халăхне коммунизмăн чаплă çĕнтерĕвĕсем патне шанчăклăн ертсе пыракан мухтавлă Коммунистсен партийĕ аллă çул тултарни çинчен каласусем ирттереççĕ.

Рабочисемпе служащисем, колхоз ĕçченĕсем, ялти механизаторсем, промысла артель членĕсем, совет интеллигенцийĕ хăйсен тăван партийĕн политикине чунчĕререн ырлаççĕ, ун тавра тата тачăрах пĕтĕçме тăрăшаççĕ. Коммунистсен партийĕ ĕççыннисен пĕрмай ÿссе пыракан материальнăй тата культурăлла ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшни çине ответлесе, вĕсем хамăр çĕршыври коммунизм строительствине хăвăртлатассишĕн вăя шеллемесĕр ĕçлеме пулаççĕ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарнă куна паллă тунă май, колхозниксемпе колхозницăсем тата МТС-ри механизаторсем уй-хирти тырпула кĕске срокра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртессишĕн, Тăван çĕршыв умĕнчи пирвайхи тивĕçе—государствăна тырă памалли плана срокчен тултарассишĕн социализмла ăмăртăва кунтан-кунах вăйлатса пыраççĕ. «Динамо», Сталин ячĕпе тăракан, «Красное Сормово» колхозсем паян-ыранах ыраш вырса пĕтереççĕ. Комбайнерсен ăмăртăвĕнче Васильев комбайнер малта пырать, вăл кулленхи нормăна ирттерсе тултарать. «Динамо» ялхуçалăх артелĕ государствăна тырă памалли графика икĕ хут ирттерсе тултарнă.

Партин Иккĕмĕш съезчĕ пулнăранпа 50 çул тултарнă ятпа июлĕн 30-мĕшĕнче парти активĕн районти пухăвĕ пулчĕ. Унта Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ аллă çул тултарни çинчен КПСС райкомĕн секретарĕ Т. Логинов юлташ доклад туса пачĕ. Халĕ пирĕн геройла парти 50 çул тултарнă ятпа пуçламăш парторганизацисенче партин усă пухăвĕсене ирттереççĕ.

П. ПАВЛОВ.

Совет халăхĕ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарнине паллă тăвать

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарнине пирĕн халăх партие чунтан-чĕререн юратса тата хаваслăн паллă тăвать. Заводсемпе шахтăсенче, транспорт предприятийĕсенче, колхозсенче, учрежденисенче тата институтсенче ĕççыннисем тăван парти 50 çул тултарнине ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илчĕç. Совет çыннисем Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарни çинчен çырнă тезиссемпе паллашаççĕ. Агитаторсем РСДРП-ăн Иккĕмĕш съезчĕн пĕлтерĕшĕ çинчен каласусем ирттереççĕ. Библиотекăсенче, Культура çурчĕсенче, клубсенче çак паллă кун ячĕпе выставкăсем организациленĕ.

Магнитогорскри металлурги комбиначĕн мартен цехĕнчи сталевар Александр Творогов çапла каланă:

— Пирĕн марксизм-ленинизмăн наукăлла теорийĕпе хĕçпăшалланнă парти совет халăхне коммунизм çулĕпе ертсе пырать. Парти ирĕкĕпе Магнитогорскри металлурги комбинатне туса лартнă. Эпир кĕске вăхăт хушшинчех ĕçлеме вĕренсе çитрĕмĕр, агрегатсен проектра палăртнă хăватĕнчен ирттерсе продукци туса кăларма тытăнтăмăр. Халĕ, партин XIX-мĕш съезчĕн кăтартăвĕсене пурнăçласа, металлургсем мартенсене татах та лайăхрах ĕçлеттерессишĕн, производствăри тăкаксене пĕтерессишĕн кĕрешеççĕ. Пилĕкмĕш пилĕкçуллăх заданийĕсене срокчен пурнăçлама сăмах паратпăр!

Таджик ССР-ĕнчи Ленинабад районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхозăн уй-хирĕнче ĕçлекенсем хушшинче Маруфов агитатор КПСС 50 çул тултарни çинчен калаçу ирттернĕ. Калаçу хыççăн Додобай Курбанов сăмах илнĕ. Вăл çапла каланă:

— ССР Союзĕнчи халăхсен историллĕ мĕнпур çĕнтерĕвĕсем Коммунистсен мухтавлă партийĕн ячĕпе тачă çыхăнса тăраççĕ. Парти çĕршыври ĕлĕк пусмăрта пулнă мĕнпур халăхсемпе пĕрле пирĕн таджик халăхне те правасăр пурнăçран, çуклăхран хăтарчĕ, ăна ирĕклĕ, пĕр тан праваллă, культурăллă тата пуян пурнăçăн çутă çулĕ çине кăларчĕ. Партипе халăх питĕ тачă çыхăнса тăраççĕ. Халăх çине таянса, парти пирĕн çĕршыв коммунизм патне каймалли тĕрĕс программăна палăртрĕ. Эпир, Таджик ССР-ĕнче çĕр мамăкĕ тăвакансем, партин XIX-мĕш съезчĕ лартнă задачăсене пурнăçлама пĕтĕм вăя парса ĕçлĕпĕр.

Пирĕн парти коммунизм тăвакан совет халăхĕн мĕнпур çĕнтерĕвĕсене организацилесе пырать, совет халăхне çĕнĕ çĕнтерÿсем тума хавхалантарать. Парти çинчен Кишиневри, Тбилисири, Дон çинчи Ростоври, Кривой Рогри тата çĕршыври ытти хуласенчи пиншер агитаторсем каласусемпе докладсем туса параççĕ.

Пĕтĕм Союзри политикăлла тата наукăлла пĕлÿсем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен обществăн вырăнти уйрăмĕсем лекцисем нумай ирттереççĕ. Бакури пропагандистсем предприятисемпе учрежденисенче Коммунистсен партийĕн çур ĕмĕр хушшинчи паттăр ĕçĕсем çинчен тĕрлĕ темăсемпе лекцисем вулаççĕ, докладсем тăваççĕ. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарни çинчен калакан тезиссене ăнлантарса пама Орел хулинчен облаçри районсене 100 докладчика яхăн кайнă. Орехово-Зуево хулинче те парти 50 çул тултарни çинчен докладсемпе лекцисем ирттерес ĕçе организациленĕ.

РСДРП-ăн Иккĕмĕш съезчĕ пулнăранпа 50 çул тултарнă май библиотекăсемпе рабочисен клубĕсенче выставкăсем организациленĕ. Партин Курск хула комитечĕн библиотекинче «Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарчĕ» ятлă выставка уçнă. Агитаторсем тата пропагандистсем темиçе çĕр çын ытла выставкăпа паллашнă. Выставкăра РСДРП-ăн Иккĕмĕш съезчĕ—рабочи класăн марксистла революциллĕ паттăр партине çĕнĕ сăнарлă партие туса хунă съезд—мĕнле иртнипе паллаштаракан материалсем нумай. (ТАСС).

„Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарчĕ (1903—1953)“ ятлă тезиссене кĕнеке туса кăларнă

КПСС Центральнăй Комитечĕн Пропагандăпа агитаци пайĕн тата КПСС Центральнăй Комитечĕн Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин институчĕн «Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарчĕ (1903—1953)» ятлă тезисĕсене Государствăн политикăлла литература издательстви уйрăм кĕнеке туса пичетлесе кăларнă.

Кĕнеке тиражĕ—пĕр миллион экземпляр. (ТАСС).

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарнă ятпа килнĕ саламсем

* * *

Китайри Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн саламĕ

ПЕКИН, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Китайри Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарнă май КПСС Центральнăй Комитетне саламлă сыру янă. Унта çапла каланă:

«СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕТНЕ.

Китайри Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ сирĕн пата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарнă ятпа хĕрӳллĕ салам ярать.

50 çул каялла, Российăри социал-демократиллĕ рабочисен партийĕн Иккĕмĕш съездĕнче ленинизм çĕнтерни пĕтĕм тĕнчери рабочисен юхăмĕн пĕтĕм историйĕнчи пысăк событи пулнă. Ленинла партие туса хуни тата ăна аталантарни 1917 çулхи Октябрьти Социализмла аслă революци патне, тĕнчере социализмла пĕрремĕш государство пулса тăрасси патне, мĕнпур çĕршывсенче коммунистсен партийĕсем хăвăрт пулса тăрасси тата вăйланса пырасси патне илсе çитерчĕç. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн социализмла общество тăвас ĕçри мухтавлă опычĕ пĕтĕм этемлĕхе малтанхи хут çапла кăтартса пачĕ: социализм чаплă ĕмĕт кăна мар, вăл тата пурнăçа кĕнĕ чаплă чăнлăх, пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисемшĕн ырă пурнăç тумалли пĕртен-пĕр çул пулса тăрать. Совет халăхĕ, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, фашизм агрессине аркатса тăкрĕ, çакă вара тĕнчери лару-тăрăва тĕпренех улăштарчĕ. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ мĕнпур çĕршывсенчи халăхсен миршĕн, демократишĕн, прогресшăн тата вăрçăпа реакцие хирĕç пыракан кĕрешĕвне ертсе пыракан хăватлă центрĕ пулса тăчĕ.

Китайри Коммунистсен партине Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ примерĕ тăрăх туса аталантарса пынă. Китайра халăх революцийĕ çĕнтерни тата Китай Халăх Республики вăйланса пыни Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ, Совет Правительстви тата совет халăхĕ пулăшса пынипе тачă çыхăнса тăрать. Совет Союзĕпе Китай халăхĕсем пĕр-пĕринпе тачă пĕрлешсе тата пĕтĕçсе тăни СССР Союзĕшĕн те, Китайшăн та, çавăн пекех пĕтĕм тĕнчери мир, демократи тата социализм лагерĕшĕн те, питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине Китайри Коммунистсен партийĕ лайăх ăнланать. Совет Союзĕнчи халăхсемпе Китайри халăхсем хушшинчи аслă туслăх кунтан-кун çирĕпленсе пырассине Китайри Коммунистсен партийĕ хытă ĕненсе тăрать.

Ленинпа Сталинăн аслă ĕçне малалла шанчăклăн туса пыракан—Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ ертсе пынипе коммунизм строительствинче тата пĕтĕм тĕнчери мире сыхласа хăварассишĕн кĕрешес ĕçре Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕпе совет халăхне çĕнĕ çитĕнӳсем тума ырă сунатпăр.

Китайри Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ.

1953 çулхи июлĕн 30-мĕшĕ».

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне

РСДРП-ăн историллĕ Иккĕмĕш съезчĕ пулнăранпа аллă çул тултарнă кун Ленин—Сталинăн аслă партине чун-чĕререн саламласа ырă сунатпăр, вăл этемлĕх телейĕ патне пымалли çула хывас енĕпе революцилле-творчествăлла питех те пысăк ĕç тунăшăн çав тери хавасланни çинчен пĕлтеретпĕр.

Польшăри рабочисен пĕрлешнĕ партийĕ тата Польшăри пĕтĕм халăх çапла шутлаççĕ: Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ вăл тĕнчери рабочи класăн «Ударнăй бригадин» чаплă тĕслĕхĕ, Марксăн—Энгельсăн—Ленинăн — Сталинăн вилĕмсĕр вĕрентĕвне пурнăçласа аслă ĕçе Ленин пек аслă ертсе пыни тĕслĕхĕ пулать.

Эпир Польшăри рабочисен юхăмĕн чи лайăх традицийĕсене таса сыхласа усратпăр тата тăтăшах аталантарса пыратпăр. Польшăри рабочисен юхăмĕ нумай вуншар çулсем хушши пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн малта пыракан отрячĕпе, халĕ коммунизм тăвакан отрядпа—Совет Союзĕнчи ĕçхалăхĕпе пĕрле кĕрешнĕ. Çав традицие эпир тăтăшах аталантарса пыратпăр.

Эпир аслă Ленина чун-чĕререн хисеплесе асăнатпăр. Вăл большевиксен речĕсене тĕреклетсе, хурçă пек çирĕп туса хунă, вĕсене историллĕ çĕнтерӳсем патне илсе пынă. Вăл Польшăри рабочисен юхăмне аталантарма нумай тăрăшнă, çав юхăмăн йăнăшĕсене тӳрлетнĕ, çавăн пекех тата Польшăри рабочисене революцире çĕнтермелли пĕртен-пĕр тĕрĕс çула кăтартса панă.

Совет Союзĕн паттăр Çарĕ ирĕке кăларнă Польша халăхĕ халĕ, совет халăхĕсен примерĕ тăрăх тата вĕсем пулăшнипе, социализм никĕсне тăвать тата социализмла халăх пулса пырать. Халăх демократиллĕ мĕнпур çĕршывсенчи халăхсем пекех, Польша халăхĕ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн ленинла кăтартăвĕсене, аслă кăтартусене, питех те хытă ĕненсе, шанса тăрать. КПСС марксизм-ленинизмăн питĕ пысăк хăватне пĕтĕçтерсе тăрать, пĕтĕм тĕнчери миршĕн, прогресшăн, социализмшăн кĕрешес ĕçре Совет Союзĕ тавра пĕтĕçнĕ çĕршер миллион çынсен мухтавĕ тата питех те пысăк шанчăкĕ пулса тăрать.

Сывă пултăр Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ тата унăн ленинла руководстви!

Польша халăхĕпе Совет Союзĕнчи халăхсен никам аркатайми туслăхĕпе тăванлăхĕ сывă пултăр тата тĕреклене пытăр!

Польшăри рабочисен пĕрлешнĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕ.

Чехословакири Коммунистсен партийĕн саламлă телеграмми

ПРАГА, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословаки телеграф агентстви çапла пĕлтерет:

Чехословакири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарнă ятпа саламлă телеграмма янă. Унта çапла каланă:

«СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕТНЕ,

МУСКАВ.

Хаклă юлташсем,

Чехословакири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ çĕнĕ йышши марксистла революцилле партие—Совет Союзĕнчи Коммунистсен партине туса хунăранпа 50 çул тултарнă ятпа сирĕн пата тăванла салам ярать тата ырă сунать.

Совет Союзĕнчи Ленинпа Сталин туса хунă тата воспитани панă парти историлле çĕнтерӳсем турĕ.

Российăри рабочисемпе хресченсем, большевикла парти ертсе пынипе, Октябрьти Социализмла Аслă революцие турĕç. Çак революци этемлĕх историйĕнче çĕнĕ самана—социализм самани пуçласа ячĕ.

Коммунистсен партийĕ ертсе пыракан совет халăхĕ çĕршывра çынна çын эксплуатацилессине пĕтерчĕ, социализмла общество туса хучĕ тата тĕрлĕ наци халăхĕсем тăванла килĕштерсе ĕçленине кăтартакан тĕслĕх туса пачĕ.

Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе совет халăхĕ Аслă Отечественнăй вăрçăра историлле çĕнтерӳсем тума пултарчĕ, этемлĕхе фашизм пусмăрлăхне кĕрсе ӳкессинчен хăтарчĕ тата халăхсен миршĕн, демократипе социализмшăн кĕрешмелли çулне кăтартса пачĕ.

Коммунистсен партийĕ ертсе пыракан совет халăхĕ коммунизм çĕнтерĕвĕ патне хăюллăн та шанчăклăн пырать.

Пирĕн пĕтĕм парти тата Чехословакири пĕтĕм халăх Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул хушшинче утса тухнă паттăрла тата мухтавлă çула вĕренессĕ, уншăн хавасланаççĕ. Вĕсем сирĕн кĕрешӳри опыта татах та лайăхрах, тĕплĕрех вĕренме кирлине ытларах та ытларах ăнланаççĕ. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн пуян опычĕпе усă курса, Чехословакири Коммунистсен партийĕ рабочи класпа хресченсен союзне туса хучĕ, Совет Союзĕ нимĕç фашизмне хирĕç кĕрешнĕ çĕрте историлле çĕнтерӳ тунипе вăл çĕршывра халăх демократи стройĕ тума пултарчĕ, Совет Союзĕ пулăшнипе Чехословакире социализм тăвас ĕçе пурнăçласа пырать.

Ленинпа Сталинăн вилĕмсĕр вĕрентĕвĕ тăрăх ĕçлесе, пролетарилле интернационализма вĕçĕ-хĕррисĕр парăнса тăрса, Чехословакири Коммунистсен партийĕ малашне те пирĕн ĕçхалăхне Совет Союзĕнчи çĕнтерӳçĕ-коммунистсен çулĕпе социализмла телейлĕ пуласлăх патнелле ертсе пырĕ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партине—мухтав!

Чехословакири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ.

Шупашкар хулинчи парти активĕн пухăвĕ

Июлĕн 30-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи парторганизаци активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пухăва КПСС хула комитечĕн секретарĕ Н. Никитин юлташ уçрĕ.

Пухура Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарни çинчен КПСС Чăваш обкомĕн секретарĕ С. Ислюков юлташ доклад турĕ.

Ислюков юлташ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарнине совет халăхĕ питĕ пысăк хавасланăхпа кĕтсе илнине палăртать. Парти 50 çул тултарни пирĕн партипе мĕнпур халăхсен пурнăçĕнче, тĕнчери революцилле юхăмра питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Коммунистсен партийĕ аслăн тата паттăррăн ертсе пынипе 1917 çулхи октябрь уйăхĕнче историре питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ революцилле çĕнтерӳ тунă. Октябрьти Социализмла Аслă революци тĕнчери этемлĕх историйĕнче çĕнĕ тапхăр, капитализм хавшаса пымалли, социализмпа коммунизм çĕнтермелли тапхăр уçса пачĕ. Коммунистсен партийĕ пирĕн Тăван çĕршыва коммунизм çĕнтерĕвĕ патне тĕрĕс те хăюллăн илсе пырать.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ ертсе пыни пирĕн çĕнтерӳсен иксĕлми çăлкуçĕ пулса тăрать. Парти çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ туса пыни унăн ретĕсем пĕрлĕхлĕ пулнинчен килет. Партин вăйĕ унăн речĕсен пĕрлĕхĕнче, вăл халăхпа тачă çыхăнса тăнинче, халăх вăйĕ вара—вăл парти тавра пĕтĕçсе тăнинче.

Ялхуçалăх институтĕнчи марксизм-ленинизм кафедрин заведующийĕ доцент Лебедев юлташ сăмах илет.

— Иккĕмĕш съездран пуçласа пирĕн парти паттăр кĕрешĕвĕн мухтавлă çулне çирĕппĕн утса тухрĕ, рабочисемпе хресченсен тĕнчери пĕрремĕш социализмла государствине ертсе пыракан, мĕнпур ĕçсыннисене çул кăтартса пыракан аслă парти пулса тăчĕ. Коммунистсен партийĕн çулĕ—аслă кĕрешӳсен çулĕ. Вăл çав кĕрешӳсенче ӳссе тĕрекленнĕ. Парти историйĕ виçĕ революци историйĕ пулса тăрать.

Лебедев юлташ мĕнпур коммунистсемпе активăн парти историне, марксизм-ленинизм теорине тĕплĕн вĕренсе пыма кирли çинчен, парторганизацисемпе массăсем хушшинчи сыхăнăва çирĕплетсе пыма кирли çинчен калать.

Дмитриев юлташ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕпе унăн Центральнăй Комитетне ĕçсыннисене телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса панăшăн пĕтĕм кăмăлтан тав тăвать, генилле Ленин, унăн ĕçне малалла туса пыраканĕ аслă Сталин ертсе пынипе кĕрешӳре пиçĕхнĕ пирĕн парти коммунизм тăвакан совет обществине çул кăтартса, шанчăклăн ертсе пыни çинчен калать.

Дмитриев юлташ пуçламăш парторганизацисем марксизм-ленинизм теорине, парти историне вĕренес тĕлĕшпе хăйсен ĕçне куллен вăйлатса пынине палăртать.

Электроаппаратура заводĕнчи пропагандист Царев юлташ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул хушшинче мĕн тери пысăк çĕнтерӳсем туни çинчен тĕплĕн, нумай тĕрлĕ фактсем илсе каласа парать, темиçе вуншар çул каялла Ленин каланă сăмахсем пирĕн пурнăçа кĕрсе пыни çинчен уйрăм тĕслĕхсем илсе кăтартать.

Сталинла преми лауреачĕ, Чăваш композиторĕ Лукин юлташ сăмах илет. Вăл Коммунистсен партийĕ халăхсен туслăхне çирĕплетсе пыни, вак халăхсен пурнăçне лайăхлатса вĕсен культурине ӳстерсе чечеклентерни çинчен нумай тĕслĕхсем илсе кăтартать.

— Телейлĕ те çутă пурнăçшăн,—тет вăл,—мĕнпур совет халăхĕ пекех, чăваш ĕçсыннисем партие чĕререн тав тăваççĕ.

Лукин юлташ искусство работникĕсем хушшинчи идеологилле ĕçре пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртать, КПСС обкомĕпе хула комитетне искусство работникĕсен политикăлла вĕренĕвне йĕркелес ĕçре ытларах пулăшу пама сĕнет.

Писатель Кăлкан юлташ литературăри ӳсĕмсем çинчен асăннипе пĕрлех çитменлĕхсене палăртать. Ĕçсыннисене коммунизмла воспитани парас ĕçре илемлĕ литература пысăк вырăн йышăнса тăрать. Анчах та пирĕн писательсемпе поэтсем тата драматургсем хăйсен творчествăлла ĕçĕпе ĕçсыннисен куллен ӳссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтерейменççĕ-ха. Чăваш писателĕсем уйрăмах рабочисемпе интеллигенци умĕнче пысăк парăмра. Литература работникĕсем коммунистсен авангардлă рольне ку таранччен те тĕплĕн сутатса параймаççĕ. Литературăлла критика та юлса пырать. Çитменлĕхсем пуринчен малтан писательсен союзĕнче ĕç çине критикăсăр пăхнинчен, критикăпа самокритикăна сарса пыманнинчен килсе тухаççĕ.

Атăл леш енчи торф предприятийĕн директорĕ Грибов юлташ совет çыннисем парти 50 çул тултарнине пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илни çинчен каларĕ.

— Эпир,—тет Грибов юлташ,—паян парти активне çакăн çинчен пĕлтеретпĕр. Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарнине кĕтсе илнĕ май пирĕн предприяти коллективĕ механизациленĕ майпа торф кăлармалли çулталăкри плана правительство хушнă срокран 12 кун маларах тултарчĕ. Кăçалхи задание иртнĕ çулхинчен 20 кун маларах тултарнă. Коллектив торф типĕтсе, вырнаçтарса хумалли плана 20 кун маларах тултарма обязательство илчĕ.

ВЛКСМ обкомĕн секретарĕ Андреева юлташ Шупашкар хулинчи çамрăксен производствăлла активлăхĕ ӳсни çинчен, çавăн пекех çамрăксен хушшинчи идеологилле ĕçе вăйлатма кирли çинчен каларĕ.

Пренире пурĕ 11 çын тухса каларĕ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарнă ятпа актив пухăвĕ КПСС Центральнăй Комитетне саламлă çыру яма йышăнчĕ.

Актив пухăвĕ парти гимнне—«Интернационал» юрланипе вĕçленчĕ.

Австрипе государство договорĕ тăвас ыйту пирки

Кăçалхи июлĕн 29-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерстви Коллегийĕн членĕ Г. М. Пушкин Австрин СССР Союзĕнчи Посолне Н. Бишофф господина Совет Правительствин нотине панă. Нота текстне аяларахра пичетлетпĕр.

«Австри Правительствин кăçалхи июнĕн 30-мĕшĕнчи асра тытмалли çырăвĕнче çапла каланă:

«Федеральнăй Правительство государство договорĕ тăвасси çинчен дипломатилле калаçусем ирттерес пирки Совет Правительстви панă сĕнĕве йышăнма юрăхлă тесе шутлать тата çав сĕнĕ майпа пĕр-пĕрин шухăшĕсемпе паллашни государство договорне хăвăрт тума май парасса шанса тăрать».

Австри Правительствин ку заявленийĕнчен çакă курăнать: Совет Правительстви Австрипе государство договорĕ тăвас ыйтăва дипломати енĕпе тивĕçлĕ калаçусем ирттернипе пăхса тухма сĕннисе Австри Правительстви килĕшет.

Анчах та Австри Правительстви Австрипе тумалли государство договорне пăхса тухас ĕç мĕншĕн 1952 çулхи сурпкуннерепе чарăнса ларни çинчен нимĕн те каламан. Çав вăхăтрах государство договорне пăхса тухас ĕç чарăнса ларнăшăн Австри Правительстви те ответлă пулса тăрать.

Потсдамра 1945 çулта пулнă конференци решенийĕсем тăрăх тата США, Англи, Франци, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Совечĕн 1949 çулхи июнь уйăхĕнче Парижра пулнă сессийĕн решенийĕсем тăрăх, Австрипе тумалли государство договорĕн проекчĕ пирки килĕштерсе çитерневччĕ, хăшпĕр пысăк мар пĕлтерĕшлĕ статьясем пирки кăна калаçса татăлманччĕ. Çапах та, Австрипе тумалли государство договорĕн проекчĕ пирки тăватă держава халиччене пĕр-пĕринпе калаçса татăлнă пулсан та, США, Великобритани тата Франци правительствисем 1952 çулхи март уйăхĕнче «кĕскетнĕ договор» текенскерне кăларса тăратрĕç, çав договора Совет Союзĕ хутшăнмасăр хатĕрленĕ. Çав договор Австри ыйтăвне йĕркелеме пулăшманни çинчен Совет Правительстви темиçе хутчен те каланăччĕ ĕнтĕ.

«Кĕскетнĕ договор», нимĕнрен малтан, Австри пирки 1943 çулта Мускавра йышăннă декларацие хирĕç пырать, унта Австри халăхне демократилле правăсем пама пулăшакан питĕ кирлĕ чылай положенисене кĕртмен. Çав «кĕскетнĕ договор» Австрипе тумалли государство договорĕн США, Англи, Франци тата СССР пĕр-пĕринпе калаçса татăлса килĕштернĕ, хăй вăхăтĕнче Австри правительстви йышăннă статьисен тексчĕсенчен каялла чакать. Çапла, асăннă проектăн халиччен калаçса татăлса килĕштернĕ 7-мĕш статьи «кĕскетнĕ договорта» çук. Çав статьяра «закон тăрăх Австри гражданĕсем шутланакан пур çынсене те, — вĕсем мĕнле раса çынни, арçын е хĕрарăм пулнине, кирек мĕнле чĕлхе калаçнине, кирек мĕнле тĕне ĕненнине пăхмасăр, — этем правине, çав шутра сăмах, пичет ирĕклĕхĕпе, тĕн, политикăлла шухăш енĕпе тата халăх пухăвĕсене ирттерес енĕпе ирĕклĕхне усă курмалла тума пур мерăсене те йышăнма кирли çинчен калана. Австрипе тумалли государство договорĕ проекчĕн халиччен калаçса татăлса килĕштернĕ 8-мĕш статьи те «кĕскетнĕ договорта» çук. Çав статьяра: «Австрин пур гражданĕсене те пĕр тан, вăрттăн сасăланипе суйламалли право панипе, çавăн пекех мĕнле раса çынни, арçын е хĕрарăм пулнине, мĕнле чĕлхепе калаçнине, мĕнле тĕн тытнине, мĕнле политикăлла шухăшлă пулнине пăхмасăр государствăн пур должноçĕсене те суйланма право панипе суйласа лартнă демократиллĕ правительство пулмалла», тенĕ. Австрипе тумалли договор проекчĕн халиччен калаçса татăлса килĕштернĕ 9-мĕш статьи те «кĕскетнĕ договорта» çук. Унта Австрин «çĕршыври политикăлла, экономикăлла тата культурăлла пурнăçра нацизмăн мĕнпур йĕрĕсене пĕтерме тăрăшмалла», фашизмла организацисене, вĕсем кирек мĕнле ятлă пулсан та, çĕнĕрен çĕклеме чармалла, Австрире нацистла тата милитаристла кирек мĕнле ĕç тума та, çавăн пек пропаганда тума та памалла мар, тесе каланă.

Çавăн пекех тата «кĕскетнĕ договор» проектĕнче Австрин хăйĕн çĕршывне хӳтĕлеме кирлĕ нацилле хĕçпăшаллă вăйсем тытма право пулмалли çинчен нимĕн те каламан. Сакăн çине уйрăмах тимлĕ пăхма тивет. Австрин хăйĕн çавăн пек хĕçпăшаллă вăйсем пулмалли çинчен вара Австрипе тумалли государство договорĕн калаçса татăлса килĕштернĕ статьинче каланăччĕ.

Çакна асăрхаттармасăр иртме çук: «кĕскетнĕ договор» Потсдамри решенисене хирĕç, çавăн пекех тата тăватă держава Австри пирки политикăлла тата экономикăлла пысăк ыйтусем енĕпе тунă килĕшĕве пĕтĕмпех хирĕç пырать. Çав килĕшĕве СССР, США, Англи тата Франци Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен 1949 çулхи июнь уйăхĕнчи канашлăвĕнче калаçса татăлса йышăннă. Унпа Австри правительстви те килĕшнĕччĕ. «Кĕскетнĕ договорта» Совет Союзĕн прависене хирĕçле каланă. Сăмахран, çӳлте асăннă килĕшӳсенче, çавăн пекех Австрипе тумалли государство договорĕн проекчĕн калаçса татăлса килĕштернĕ статьисенче Германин Австрири ĕлĕкхи укçисене илме Совет Союзĕн право пурри çинчен каланăччĕ. «Кĕскетнĕ договорта» кун пирки каламан.

Çӳлерехре каласа панисенчен çакă курăнать: «кĕскетнĕ договор» тенĕскер Австри ыйтăвне йĕркелеме пулăшмасть, ăна пăхса тухма йышăнасси çук, мĕншĕн тесен вăл тăватă держава пĕр-пĕрин хушшинче халиччен тунă килĕшӳсене хирĕç пырать тата чăннипех те никама пăхăнман демократиллĕ Австри туса хурас ĕçпе килĕшсе тăмасть.

Çав вăхăтрах Австри правительстви хăйĕн 1952 çулхи июлĕн 31-мĕшĕнчи меморандумĕнче, ООН членĕсене тăракан мĕнпур государствăсене ярса панă меморандумра, «малашне государство договорĕн кивĕ проектне никĕсе хурса калаçусем ирттерме май килмест», тенĕччĕ. Австри çав меморандума ярса париччен, 1952 çулхи майăн 24-мĕшĕнче, Австрин Ют çĕршыв Ĕçĕсен министрĕ Грубер господин: «Австрин 1949 çулхи никĕс çинче калаçусем ирттерме килĕшмест, 1952 çулхи никĕс çинче калаçусем ирттерме хатĕр», тесе пĕлтернĕччĕ.

Австри Правительствин асăннă заявленийĕсем Австрипе тумалли государство договорĕн проектне, тăватă держава 1949 çултах тĕп статьясем пирки калаçса татăлса килĕштернĕ тата Австри правительстви 1952 çулхи суркуннеччен хăй килĕшнĕ проекта, сирсе яраççĕ.

Çӳлерехре каланисенчен çакă курăнать: Австрипе тумалли государство договорĕн халиччен, тĕпрен илсен, калаçса татăлса килĕштернĕ проектне виçĕ держава, СССР хутшăнмасăр, Совет Союзĕн интересĕсене тӳррĕмĕнех пăсса, хатĕрленĕ «кĕскетнĕ договор» текенскерпе улăштарма хăтланса, Австрипе государство договорĕ тăвас ĕçе чарса лартнăшăн Австри Правительстви США, Англи тата Франци Правительствисемпе пĕрлех ответлă пулса тăрать.

Çӳлте çырнисене каласа панă май Совет Правительстви çакна пĕлесшĕн: Австри Правительстви халиччен пекех «кĕскетнĕ договор» проекчĕшĕн тăрать-и тата Австри правительстви хăйĕн 1952 çулхи июлĕн 31-мĕшĕнчи меморандумĕнче калани—малашне государство договорĕн халиччен, тĕпрен илсен, калаçса татăлса килĕштернĕ проектне никĕсе хурса калаçусем ирттерме май килмест тени—вăйра юлаççĕ-и? Çакна пĕлтернĕшĕн Совет Правительстви тав тунă пулĕччĕ. Австри Правительстви çакăнта лартнă ыйту пирки пĕлтерни Австрипе тумалли договор тĕлĕшпе малашне калаçусем ирттерес ĕçшĕн мĕнле те пулин вырăн йышăнмасăр тăма пултараймасть.

«Кĕскетнĕ договорăн» проектне сӳтсе явас ĕçе пăрахăçлани, паллах ĕнтĕ, тăватă державăна Австрипе тумалли государство договорне пăхса тухма çĕнĕрен тытăнма май парать. Çак ĕçе государство договорĕ тăвассипе сыхăннă, халиччен йĕркелеймен ыйтусем тăрăх калаçса татăлса килĕштерес тĕллевпе тумалла».

Бишофф господин Совет Правительствин çак нотинче мĕн калани çинчен Австри Правительствине пĕлтерме пулнă.

Австрипе тумалли государство договорĕ пирки Совет Правительстви Франци, США тата Англи Правительствисене панă нота

Кăçал июлĕн 30-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерстви Францин Мускаври Посольствине Австрипе тумалли государство договорĕ пирки Совет Правительствин нотине панă. Нота текстне аяларахра пичетлетпĕр.

«Австрипе тумалли государство договорĕ пирки Франци Правительстви кăçалхи июнĕн 11-мĕшĕнче ярса панă нотăна илни çинчен пĕлтерсе, СССР Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерстви çапла калама кирлĕ тесе шутлать.

Асăннă нотăран çакă курăнать: Франци Правительстви, çавăн пекех США-па Англи Правительствисем, хăйсем 1952 çулхи мартăн 13-мĕшĕнче кăларса тăратнă «кĕскетнĕ договор» текенскерĕн проектне малтанхи пекех хӳтĕлеççĕ. Ку проект вара тăватă держава Австри тĕлĕшпе Потсдамра йышăннă решенипе килĕшсе тăмасть, Франци, США, Англи тата СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен 1949 çулхи июньре Парижра пулса иртнĕ канашлăвĕнче Австри пирки политикăлла тата экономикăлла пысăк ыйтусем енĕпе калаçса татăлнă постановленисене хирĕç пырать, Совет Союзĕн интересĕсене хытă пăсать тата никама та пăхăнман, демократиллĕ Австри государстви туса хума май параймасть. Çакăн çинчен Совет Правительстви темиçе хутчен те пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ.

«Кĕскетнĕ договорăн» çак проектне Франци, США тата Англи Правительствисем СССР Союзне хутшăнтармасăр туса хатĕрленĕ тата ăна тăватă держава, тĕпрен илсен, килĕштернĕ государство договорĕн проекчĕ вырăнне, тăватă держава Австри тĕлĕшпе туса хатĕрленĕ асăннă решенисем тăрăх туса хатĕрленĕ проект вырăнне, кăларса тăратнă.

Совет Правительстви 1952 çулхи августăн 14-мĕшĕпе сентябрĕн 27-мĕшĕнче тата кăçалхи январĕн 27-мĕшĕнче ярса панă нотăсенче, Австрипе государство договорĕ туса хатĕрлесе ĕçе вĕçлеме хатĕр тăни çинчен пĕлтерсе, Франци, США тата Англи Правительствисем хăйсем Австри тĕлĕшпе тăратнă «кĕскетнĕ договор» текенскерĕн проектне пăрахăçлама килĕшме хатĕр тăнипе тăманнине пĕлесшĕн пулнăччĕ. Анчах та Совет Правительстви Франци Правительствинчен, çавăн пекех США-па Англи Правительствисенчен те, «кĕскетнĕ договор» проектне пăхса тухассине пăрахăçлама килĕшни çинчен ответ илеймерĕ.

ССР Союзне хутшăнтармасăр виçĕ держава хатĕрленĕ «кĕскетнĕ договор» проектне Австрипе тумалли государство договорĕн тĕп статьисем тăрăх килĕшсе татăлнă проект вырăнне туса хатĕрленĕскерне, пăхса тухассине пăрахăçлани Австрипе государство договорĕ тăвасси çинчен ыйтăва çĕнĕрен, çав договора тăвассипе сыхăнса тăракан, тавлашуллă ыйтусем пирки килĕшӳ тăвас тĕллевпе тăватă государство хушшинче пăхса тухма тытăнма май панă пулĕччĕ.

Çакăн пек нотăсене США-па Англи Правительствисене те ярса панă».

СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствинче

Июлĕн 30-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерстви США-н Мускаври Посольствине çакăн пек нота янă:

«Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствине çапла пĕлтерме кирлĕ тесе шутлать.

Тĕрĕслесе пĕлнĕ сведенисем тăрăх, кăçалхи июлĕн 29-мĕшĕнче, Владивосток вăхăчĕпе 7 сехет тĕлнелле, «Б-50» йышши тăватă моторлă бомбардировщик СССР государство чикки урлă малтан Гамов мысĕ патĕнче каçнă, унтан СССР территорийĕ çинче Владивостокран инçетре мар, Аскольд утравĕ патĕнче вĕçсе çӳренĕ. Çав самолет çинче США-н самолечĕсене уйăрса илмелли паллăсем пулнă. Америка самолетне вăл СССР территорине кĕни çинчен пĕлтерес тата ăна Совет Союзĕнчен тухса кайма хушас шутпа Совет Союзĕн икĕ истребителĕ çав самолет патне çывхарсан, Америка самолечĕ вĕсем çине пеме тытăннă, совет самолечĕсенчен пĕрне пысăк сиен кӳнĕ, унăн фюзеляжне тата сулахай çунаттине шăтарса пĕтернĕ, çавăн пекех тата истребителĕн летчик лармалли кабинине сиен кӳнĕ. Совет самолечĕсен ирĕксĕрех Америка самолетне хирĕç пеме тытăнмалла пулнă. Кун хыççăн Америка самолечĕ тинĕс еннелле вĕçсе кайнă.

Совет правительстви Америкăн çар самолечĕ совет чиккисене çавăн пек сĕмсĕррĕн пăснине хирĕç татăклă протестлени çинчен США Правительствине пĕлтерет, чикĕ урлă каçнăшăн айăплă çынсене çирĕп ответ тыттармалла тесе çине тăрать тата Америка самолечĕсене малашне СССР государство чиккисене пăсма чарас тĕлĕшпе США Правительстви халех мерăсем йышăнассине кĕтет».

Австрие оккупаци расхочĕсенчен хăтарасси çинчен Совет Правительстви Австри Правительствине панă нота

ВЕНА, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Паян СССР Союзĕн Австрири Верховнăй Комиссарĕ И. И. Ильичев Австри канцлерне Раабу господина Совет Правительствин çакăн пек нотине ярса панă:

«Австри Правительствин шухăш-кăмăлне шута илсе, СССР Правительстви 1953 çулхи августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа Совет Союзĕн Австрири оккупаци çарĕсене тытса тăма тухакан мĕнпур расходсене хăй çине илес, çапла вара Австрин государство бюджетне çав расходсенчен хăтарас тесе йышăннă».

„Агитатор блокночĕн" черетлĕ номерĕ

КПСС Чăваш обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ кăларакан «Агитатор блокночĕн» черетлĕ, 15-мĕш номерĕ пичетленсе тухнă. Унта Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ аллă çул тултарни çинчен калаçу ирттермелли материал, М. Репкинăн «Строительство материалĕсем ытларах туса кăларар» ятлă статьи пичетленнĕ.

«Малта пыракансен опычĕ» ятлă пайра Улатăр МТС-ĕнчи комбайнер И. Цапаев юлташ комбайн агрегачĕн ĕçне мĕнле йĕркелени çинчен каласа пани пичетленнĕ. Кунсăр пуçне, пирĕн çĕршывăн социализмла экономикипе культури кăçалхи пĕрремĕш çурçулăхра мĕнле ӳссе пыни çинчен калаçу ирттермелли цифрăсемпе фактсем пур.

Комбайнсемпе тата ытти машинăсемпе сменăри нормăна ытлашшипех тултарса ĕçлер!

Куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав пачĕç

ЙĔПРЕÇ. (Хамăр корр.). Йĕпреç МТС-ĕнчи механизаторсен коллективĕ иртнĕ кĕркуннехипе хĕллехи сезонта тракторсемпе ытти машинăсене юсас тĕлĕшпе ăмăртса ĕçлерĕ. Узловой меслетпе ĕçлени вĕсене пур машинăсене те пысăк пахалăхпа тата хăвăрт юсаса пĕтерме пулăшрĕ. МТС февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне мĕнпур тракторсемпе кăкарса ĕçлемелли машинăсене çуракине хатĕрлесе çитерчĕ. Машинăсене лайăх юсани вĕсене çуракине кĕске вăхăтра пысăк пахалăхпа иртерме, колхозсемпе тунă договора срокра пурнăçлама май пачĕ. МТС кĕрхи тырри калчине кĕрхи çĕртме пуссине сӳрелемелли, нумай çул ӳсекен курăк, хĕреслĕ майпа акмалли тата çĕрулмие тăваткал кĕтеслĕ меслетпе лартмалли плана чылай иртерсе тултарчĕ. Комбайнсемпе молотилкăсене тата тырпул пухса кĕртмелли ытти машинăсене те плана палăртнинчен нумай малтарах юсаса пĕтерчĕ. Халĕ пур комбайнсем те колхозсен хирĕнче тырă выраççĕ.

СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерстви тата ВЦСПС кĕркуннехипе хĕллехи сезонта тракторсемпе ытти машинăсене юсас тĕлĕшпе ăмăртса ĕçленин итогне тунă хыççăн, Йĕпреç МТС-ĕн коллективĕ мала тухнине палăртнă. МТС-а СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин тата ВЦСПС-ăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне панă тата 20 пин тенкĕ укçа парса премиленĕ.

Июлĕн 25-мĕшĕнче, СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерстви тата ВЦСПС хушнипе, Чăваш АССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министрĕн заместителĕ Захаров тата облпрофсовет представителĕ Светлов юлташсем ăмăртура мала тухнă Йĕпреç МТС-ĕн коллективне куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав пачĕç тата малашне çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхаланса ĕçлеме ырă сунчĕç.

Хĕрлĕ ялав панă хыççăн КПСС райкомĕн секретарĕ Багров, 6-мĕш трактор бригадин бригадирĕ Алексеев, МТС директорĕ Курманин юлташсем сăмах каларĕç. Вĕсем МТС коллективĕ колхозниксемпе механизаторсен хушшинчи ĕçлĕ туслăха çирĕплетсе пырса, ăмăртăва тата анлăрах сарса ярса, акса пуçнă тырпула пĕр тăккаламасăр пуçтарса кĕрес, тырă хатĕрлемелли плана срокчен тултарас, кĕрхи тырра вăхăтра акса хăварас, кĕрхи çĕртме тумалли плана иртерсе тултарас, вăрлăх фондне вăхăтра хывас, колхозсене обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме пур енĕпе те пулăшас, колхозниксене ĕçкунĕшĕн тивекен тупăша ӳстерсе пырас, машинăсене юсамалли сезона лайăх хатĕрленсе кĕтсе илес тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр кĕрешме сăмах пачĕç.



«Заготзерно» Шупашкарти хатĕрлев пунктĕнче.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: сулахайра — А. М. Майорова лаборантка тырă нӳрлĕхне тĕрĕслет. Сылтăмра—колхозсем государствăна пама тырă илсе килнĕ.
П. ЕФРЕМОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Хир карапĕн капитанĕ

Феряг Абитов механизатор-комбайнер пулса 7 çул ĕçлет. Малтанхи çулсенче вăл «Коммунар» комбайнпа ĕçленĕ, 1951 çултанпа самоходнăй «С-4» комбайнпа ĕçлет. Пĕлтĕр вăл 275 гектар пухса кĕртнĕ, кăçал 350 гектар пухса кĕртме обязательство илчĕ. Хăйĕн обязательствине Ф. Абитов юлташ ăнăçлă пурнăçласа пырать. 3 кун хушшинче кăна вăл 30 гектар ытла ыраш вырнă. Кулленех 8 гектар вырмалла пулсан, Ф. Абитов юлташ 10—12-шер гектар вырать.

Мĕнрен килет-ха Абитов юлташăн агрегачĕ лайăх ĕçлени? Тĕп сăлтавĕсенчен пĕри вăл машинăна тырпул пухса кĕртме пур енчен те тĕплĕн хатĕрлени пулать. Абитов юлташ комбайна вăхăтра тата лайăх юсаса хатĕрленĕ.

Абитов юлташ ĕçлекен комбайн çӳлĕ тырра та пĕр тикĕс тата ним чăрмавсăр вырать. Çӳлĕ тырра, уйрăмах ыраша, вырнă чухне час-часах çакăн пек чăрмав пулма пултарать: мотовила касăлнă тырра консольнăй шнека урлă, ветровой щит çине тайăлтарса хурать. Вара шнек тырра центральнăй транспортер çине пĕр пек куçарса тăмасть, тырă нумай купалансан тин транспортер çине парать. Çакă, паллах ĕнтĕ, авăн çапакан механизма сиен кӳрет. Кун пек ан пултăр тесе, Абитов комбайнер çĕçĕ çине хутлам-хутламлă тимĕр (трясная доска) туса хунă. Çĕçĕ калла-малла çӳренĕ чухне вăл та куçать, тырра силлет, шнек çине çакланма пулăшать.

Транспортер айне шĕкĕлченĕ тырă нумай ан пухăнтăр тесе, Абитов юлташ центральнăй транспортерăн айне уçăлса хупăнакан люк тунă. Тырра тасатмалла пулсан, люка уçать те хăвăртрах транспортер айĕнчи тырра юхтарса кăларать.

Агрегат коллективĕ комбайна техника тĕлĕшĕнчен уйрăмах тĕплĕн пăхса тăрать. Çак ĕçе агрегатра ĕçлекенсем пурте хутшăнаççĕ. Абитов юлташ хăй мотора, электрооборудование, проводсене тĕплĕн тĕрĕслет, муфтăсем мĕнле тăнине тата сăнчăрсем пушаннипе пушанманнине пăхса тухать. Комбайнер помощникĕ автонагнетательпе подшипниксене асăрхаса тăрать, вĕсене вăхăтра çу сĕрет. Техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăрассине комбайн çинче ĕçлекен колхозниксем те лайăх туса пыраççĕ. Вĕсем машинăна яланах тул енчен тасатаççĕ, соломокопнителĕн урапине çу сĕрсе тăраççĕ. Заправщик бака бензин тултарать, шыв турттаракан лавçă радиатора шыв ярать.

Комбайн ĕçĕнче пĕчĕк кăлтăксем пулсан, çав вырăнтах юсаççĕ. Агрегат çинче икĕ комплект уçăсем пур, запаслă пайсем те çителĕклĕ.

Машинăна талăкра икĕ хут техника тĕлĕшĕнчен тĕрĕслеççĕ, шыв, горючи тата сĕрмелли материалсем яраççĕ.

— Агрегат ĕçĕн ăнăçлăхĕ, тĕпрен илсен, вăхăтпа туллин усă курма пĕлнинче. Эпир вăхăта сехет тăрăх мар, минут тăрăх шутласа ĕçлетпĕр,—тет Абитов. Чăнах та унăн агрегачĕ иккĕмĕш çул ĕнтĕ сехет графикĕ тăрăх ĕçлет. Вăл график çинче кăтартнă вăхăта участок йĕритавра вырнă чухне çаврăнса иртернĕ вăхăтпа ялан тĕрĕслесе тăрать.

Агрегатра ĕçлекенсене вырса пухнă гектар тăрăх ĕçкунĕ параççĕ.

«Гвардеец» колхоз членĕсем механизаторсемпе яланах туслă пулса ĕçлеççĕ. Комбайн çинче ĕçлекен колхоз членĕсен айăпĕпе машина ĕçлемесĕр ларни нихçан та пулман. Икĕ çын бункерти тырра комбайн ĕçленĕ чухнех михĕсем çине тултарать те ятарласа уйăрнă лавсем çине хурать. Лавçăсем пĕрин хыççăн тепри тырра витнĕ итем çине турттараççĕ.

Тырă хăмăлне кĕскерех хăварса вырнă чухне хăшпĕр вырăнсенче комбайн çĕççи тăпрана лекет. Паллах ĕнтĕ, çакă çĕçе мăкатать. Çавăнпа та хастарлă механизаторсем комбайнăн касакан аппаратне уйрăмах астуса тăраççĕ, ялан таса тытаççĕ.

Коллектив тăрăшмасан ĕçре ăнăçлăх пулма пултарайманнине Абитов юлташ лайăх пĕлет. Унăн агрегатĕнче ĕçлекенсем пĕр пĕрне туслă, юлташлă, пĕри ĕçленине тепри пăхса тăрас йăла çук, хутте мĕнле ĕçе те пĕрле туса хураççĕ. Агрегат коллективĕ малашнехине курса, умра тăракан задачăна пурнăçласшăн тăрăшса ĕçлет. Абитов юлташ комбайн çинче ĕçлекенсене илнĕ обязательствăсем çинчен астутарсах тăрать, кулленхи ĕç итогне туса парать, ыранхи задачăна палăртать.

— Государство пире чаплă техника шанса пачĕ. Колхозниксем пирĕнтен, комбайнерсенчен, нумай кĕтеççĕ. Çав шанăçа тӳрре кăларасси, илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçласси—пирĕн пĕрремĕш тивĕç,—тет Феряг Абитов комбайнер.

Пурнăçлатех вăл хăй каланă сăмахсене. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна колхозниксем хир карапĕн капитанĕ тесе чĕнеççĕ.

И. МЕШКОВ.
Чкаловски районĕ.

Тырă килет

(Шупашкарти «Заготзерно» пункчĕн директорĕ Т. Иванов юлташ каласа пани)

Çĕнĕ тырă тиенĕ пирвайхи автомашинăсемпе лавсем Шупашкарти хатĕрлев пунктне июлĕн 26-мĕшĕнче пыма тытăнчĕç. Юлашки кунсенче вĕсем татти-сыпписĕр килеççĕ. Çак кунсенче кунти хатĕрлев пунктне уйрăммăнах Шупашкар, Муркаш тата Ишлей районĕсенчи колхозсем тырă нумай параççĕ.

Шупашкар районĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхоз хатĕрлев пунктĕнче пĕрремĕш квитанци илчĕ, виçĕ кун хушшинче 17 тонна яхăн çĕнĕ тырă пачĕ. Унтан çак районти Сталин ячĕпе, Ленин ячĕпе, Кадыков ячĕпе, Жданов ячĕпе тăракан, «Дружба» тата ытти нумай колхозсенчен тырă йышăнма пуçларăмăр. Халĕ ĕнтĕ ку колхозсенчен кашни кун тырă тиенĕ машинăсемпе лавсем килеççĕ.

Муркаш районĕнчи колхозсем те хатĕрлев пунктне кулленех тырă илсе пыраççĕ. «Красное Сормово» ялхуçалăх артелĕн автомашинисем кашни кун икшер рейс тăваççĕ. Колхоз государство умĕнчи пĕрремĕш тивĕçе чыслăн пурнăçласа тырă памалли графика иртерсе тултарать. Асăннă районти Энгельс ячĕпе тăракан, «Знамя коммунизма», Ишлей районĕнчи Карл Маркс ячĕпе, Жданов ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем те государствăна тырă парас ĕçе лайăх хутшăнаççĕ.

Тырă паракан колхозсен хисепĕ кашни кунах ӳсет. Колхоз ĕçченĕсем Тăван çĕршыв умĕнчи пĕрремĕш тивĕçе—государствăна срокчен тырă парса татассине хăйсен чи сывăх ĕçĕ тесе шутлаççĕ. Эпир, хатĕрлев пунктĕнче ĕçлекенсем, çĕнĕ тырра лайăх йышăнса илес, тырă леçме килекенсен ыйтăвĕсене пурне те тивĕçтерес тесе, мĕн кирлине пурне те тума тăрăшатпăр.

* * *

КАНАШ, июлĕн 30-мĕшĕ. (Телефонпа). Государствăна тырă парас ĕçе хутшăнакан колхозсен йышĕ ӳсех пырать. Канашри хатĕрлев пунктне июлĕн 28—29-мĕшĕнче Чурачăк районĕнчи «Дружба», Шăхасан районĕнчи «Герой», Канаш районĕнчи «Красное пламя», Тăвай районĕнчи «Искра Ильича» тата «Красное Сормово» колхозсем 200—250-шар центнер çĕнĕ тырă килсе пачĕç.

М. РАЗНОМАЗОВ.

ФЕЛЬЕТОН

Урамри канашлу

Райсовет исполкомĕн председателĕ патĕнче хĕрӳллĕ канашлу пулса иртрĕ. Унта ял Совечĕсемпе колхозсене пулăшма яла активистсене яма йышăнчĕç. Председатель вĕсене хăйсен пысăк ответлăхĕ çинчен асăрхаттарчĕ. Унтан вăл кама хăш яла яма палăртнине вуласа пачĕ. Çавна пурте пĕр сывламасăр итлерĕç. Вара, уйчен пĕр туйăмпа ларнăскерсем, хăшĕ мачча, хăшĕ урайне пăхса, район географине кашниех хăйĕн пуçĕнче хăйне майлă вулама пуçларĕç...

Председатель патĕнчи канашлу пĕтрĕ. Исполком умĕнче никам пухмасăр тепĕр канашлу пуçланчĕ.

— Эх, аван та-çке халĕ уйсем тăрăх утма!—терĕ иккĕн пыракансенчен пĕри, типтерлĕ çипуç тăхăнни.

— Çапла. Эсир акă, хăвăр калашле, тухатăр та утатăр. Тепĕр сехетрен пырса та çитетĕр. А манăн?

Çав вăхăтра Исполком умне ик-виçĕ машина вĕçтерсе çитрĕç.

— Кама ăçта леçмелле?

— Хучаша, Хурамалăха, Тури Ачака!..

— Мăн Явăша каяканни те пур кунта!—сырса илчĕç шофера.

— Тавах «ырă» сăмахăра!..

— Мĕн-ма тата?

— Çумăр хыççăн тухмастăп сирĕн çулпа. Выла çинче виçĕ талăк пылчăкра ларни халĕ те асăмра.

— Тĕрĕс калать. Утас пулать çуранах.

— Вăл çапла. Машина кĕтни ахалех пулчĕ. Анчах мĕнле-ха каçмалла?

— Лапракасси?.. Лапракасси?—шанкăртатрĕ телефон.—Калăр-ха: Выла урлă мĕнле каçмалла?

— Ĕнер çуран каçма пулатчĕ. Паян çук...

— Мĕншĕн апла?

— Çумăр шывĕпе кĕпере йăвантарса пăрахнă.

— Вăт тамаша!—шарт çапрĕç алла Хучашалла каякансем.

— Вĕсемпе мар-тăк, хамăрпа,—терĕç теприсем шофера.

— Ăçта?

— Пакăша!

— Тавах «ырă» сăмахăра. Исментер айĕнчи сырмана, Некрасов шофер пек, машинĕ-мĕнĕпех тăрăнтарас тетĕр-им эсир мана.

— Эппин... Янасала?—терĕç ыттисем, çул-йĕр пайĕн заведующийĕпе Тимофей Калитовпа пĕрлисем.

— Акă мĕн калам сире,—терĕ шофер.—Юрпаш шывĕ çинче Анат Сăнарта эпĕ астăвасса пуçланă кĕпере халĕ те туса пĕтермен,—пĕрре. Çак шыв çинчи Кĕçĕн Дворикри кĕпер шăна вĕçнипе сулланать,—тепре. Çав çулпа Янасала манăн мĕнле чупса каймалла?

— Сăмаххишĕн çын кĕсйине каймастăр-ха,—терĕ Калитов.

— Тĕрĕс сăмахăн кукри çук, Тимофей Андреевич!

Ытти автомашинăсем патĕнче те çав калаçăвах. Исполком шоферĕпе пĕр пай заведующийĕ кастараççĕ сăмаха пуринчен те самайрах.

— Эсир мĕн мана ним пĕлмен çын вырăннех хуратăр-и капла? Калăпăр, Турая çитме нумай-нумай 12 километр. А эсир?..—хăмленсех калаçать пай заведующийĕ.

— А эсир тата простой арифметикăна пĕлмен çын пек калаçатăр. Калатăп-çке сире, пылчăк чухне Турай çапипе кайма çук тесе. Мамарлан сырмине ырса та ан кĕр—кĕперĕ сырма тĕпĕнче кăна выртать. Етĕрне районĕнчи Вырăс Чурашипе кайма тивет. Унта çитме 12 километр. Унтан Етĕрнепе Шупашкар хушшинчи çулпа—Турая. Чурашран унта çитиччен тепĕр икĕ вуникĕ самаях. Акă пуçĕ те—36. Турайне çитсен ял Совечĕ акă сан умрах. Унтах колхоз правленийĕ, клуб, шкул... Анчах сырма урлă каçма çук. Уя тухса ял тавра çаврăнса пымалла. Каллех тăватă километр ытлашшипех тумалла. Вăт сире 40 километра çитрĕ те!

— Ăнланмастăп эпĕ сире!—хушса хучĕ пĕри.—Путевка çине Турая кайма 12 километртан мала çырмастпăр. Бензинне вара 40 километршăн пĕтерме тивет. Кам ĕненет пире?

— Тăхтăр-ха. Итлĕр-ха эсир! — парăнмасть лешĕ, председатель шоферĕ майĕпе.—Калăпăр, акă Мăн Явăша каймалла. Вара каллех Етĕрне районне тухмалла. Явăша çитес тесен, Чутай еннех каçмалла.

Шофер тата ытларах хĕмленчĕ. Пикенсех ăнлантарма тытăнчĕ.

— Калăпăр,—терĕ вăл,—райцентртан Лапракассине алă парса çитермелле. Анчах Выла урлă кĕпер çук тата паянхи пек пылчăк пулсан, унта ăçтан каймалла? Каллех Вырăс Чураша тухмалла. Унтан Бараниха кĕперĕпе каçса, Етĕрне районĕнчи Кăкшăма, Шемертене... Унтан—хамăр районти Тури Ачака. Вара тин Лапракассине анмалла. Тĕрĕсрех каласан, райцентртан тухатпăр та каллех çав тĕле çаврăнса çитетпĕр. Вăт çапла çаврăнса çӳретпĕр эппин!—шофер тикĕс тăпра çине отверкăпа чĕрсе, ункă çавăрса та хучĕ. — Наглядный картина!

— Кун пек сунарçă кăна çӳрет,—тавăрса хучĕ пĕри. Куяна йĕрлесе курнă-и эсĕ? Вăл пĕр тĕлтен сиксе тухать, чупать-чупать те, каллех çав вырăна çаврăнса пырать. Вара ирĕксĕрех...

— Именно ирĕксĕрех!—пӳлсе хучĕ шофер.—Выла леш енче çур район вĕт-ха пирĕн. Мăн Явăша, Ямаша, Хучашпа Хурамалăха та тавра çав çулпах каймалла. Вунă-вунпилĕк километр вырăнне—çаврăнатăн утмăл пилĕк.

...Исполком патĕнче ир пуçланнă канашлу каçалапа тин пĕтрĕ. Пĕрисем ялсене тухса утрĕç. Теприсем—шыв урлисем—ырана юлчĕç.

Кун пек канашлу Советскинче яланах пулкалать.

Халĕ эпир те председатель патĕнчи официальнăй канашлăва тепĕр хут таврăнатпăр. Унта исполкомăн çул-йĕр пайĕн заведующийĕ Калитов юлташ, унчченхи канашлусенчи пекех, пĕр именмесĕр çапла каларĕ:

— Пĕлтĕр çĕнĕ кĕперсем тумалли тата кивисене юсамалли плана пурĕ те 12 процент кăна тултартăмăр. Кăçал унтан та сахал турăмăр. Япăх ĕçлетпĕр, юлташсем. Чăтма çук япăх!..

Н. ПУШКИН.

Пахча çимĕçсем параççĕ

УЛАТĂР. Районти чылай колхозсем кăçал пысăк тухăçлă пахча çимĕçсем пăхса çитĕнтерчĕç, халĕ ĕнтĕ вĕсене пухма, государствăна пама тытăнчĕç.

«Победа» ялхуçалăх артелĕ хатĕрлев пунктне виçĕ тонна ытла хăяр леçсе пачĕ. «Красный луч», «Стахановец» тата «Победа Октября» колхозсем те çак çимĕçе вуншар центнер леçсе пачĕç.

«Путь Ильича» ялхуçалăх артелĕ государствăна пама пилĕк тонна ир пулакан купăста хатĕрленĕ.

Н. АННЕНКОВ.

Çăмăл автомашинăсем туянаççĕ

ИШЛЕЙ. Районти ĕççыннисен пурнăçĕ çулсеренех лайăхланса пырать, вĕсен культура шайĕ ӳсет. Рабочисемпе служащисем тата колхозниксем культура таварĕсем — патефонсемпе радиоприемниксем тата хуткупăссем нумай туянаççĕ.

Юлашки икĕ çул хушшинче уйрăм çынсем туяннă мотоциклсемпе велосипедсен хисепĕ нумай ӳсрĕ. Ишлейри вăтам шкул учителĕсем Л. Репков, В. Ярославцев тата Ишлей ялпоĕнче ĕçлекен Матвеев «Москвич» маркăллă çăмăл автомашинăсем туяннă.

А. МАСТЕРОВ.

Кĕнекене—халăх хушшине

Çак кунсенче КПСС Чăваш обкомĕнче республикăри тата Шупашкарти культура работникĕсен, библиотекарьсемпе кĕнеке сутакан работниксен, Чăвашгиз редакторĕсен, Сыхăну пайĕпе Чăвашпотребсоюз сотрудникĕсен тата писательсемпе журналистсен канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Канашлура Чăвашкниготоргăн управляющийĕ Суворов юлташ пуринчен малтан сăмах илчĕ. Вăл каланă тăрăх, пирĕн республикăра марксизмпа ленинизм классикĕсен произведенийĕсене, политика, наука, ялхуçалăх, медицина ыйтăвĕсем тăрăх çырнă кĕнекисене тата вырăссемпе ытти халăх писателĕсен романĕсемпе повеçĕсене, çав хушăрах чăваш писателĕсемпе поэчĕсем çырнисене халăх хушшине сарас ĕç чиперех пулса пынă пек курăнать. Çавăн пекех Шишкин юлташ та (Чăвашпотребсоюз), Барац юлташ та (Союзпичет), Соснин юлташ та (бибколлектор) хăйсен сăмахĕсенче кĕнеке сарас ĕç лайăх пулса пырать тесе ĕнентерме тăрăшрĕç. Анчах та канашлура тухса каланă ытти юлташсем пирĕн республикăра кĕнеке сарас ĕç пачах та çителĕксĕр пулнине палăртрĕç, çав хушăрах вĕсем çӳлерех асăннă юлташсем хăйсем туса пымалли ĕç çине сӳрĕккĕн, ответсăр пăхнине хытă критиклерĕç.

— Массăлла библиотекăсене çителĕклĕ таран кĕнеке парса тăрасси вăл,—тет Максим Горький ячĕпе тăракан республикăри Центральнăй библиотекăн директорĕ Сергеева юлташ,—бибколлекторăн тĕп ĕçĕсенчен пĕри пулать. Хамăр енчен эпир Соснин юлташа библиотекăсене кирлĕ кĕнекесен списокне парса тăратпăр. Калас пулать: ку ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Бибколлекторта ĕçлекенсем час-часах библиотекăсене кирлĕ мар кĕнекесем ярса тултараççĕ. Сăмахран, Улатăр хулине чăвашла литература нумай ярса панă, ветеринари ыйтăвĕпе çырнă пĕчĕк кĕнекесене 20—25-шер экземпляр ăсатнă. Ку кĕнекесем чăвашсем пурăнакан районсенче питĕ кирлĕ-çке! Мĕншĕн çакна шута илмеççĕ-ши бибколлекторти юлташсем?

Асăннă организаци,—тет малалла Сергеева юлташ,—çĕнĕ кĕнекесене чăн малтан хуласенче вырнаçтарма тăрăшать. Чăвашкниготоргпа бибколлектор айăпĕпе КПСС XIX-мĕш съезчĕн материалĕсем районсемпе ялсенче пачах çителĕксĕр пулчĕç. Çав историлле документсем вырăнсене нумай кая юлса çитрĕç.

Бибколлектор çумĕнче кĕнекесем суйласа илес, вĕсене библиотекăсене ăсатас тĕлĕшпе ĕçлеме ятарласа комисси тунă, анчах та çав комисси сайра хутра кăна пухăнать, начар ĕçлет. Çĕнĕ кĕнекесене каталогласси, вĕсем çинчен хитрелетсе тунă пĕлтерӳсем кăларса çапасси, витринăпа выставкăсем уçасси те бибколлектор ĕçĕ пулса тăрать. Кунта ку ĕçе те тумаççĕ. Ĕç ăнăçлă пулса пытăр тесен, малашне бибколлектор ĕçне тăтăшах контроллесе тăмалла.

Сĕрпӳ районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхозри библиотека заведующийĕ Николаев юлташ Союзпичетĕн Сĕрпӳри уйрăмне критиклет.

— Кунта,—тет Николаев юлташ,—питĕ ырă çынсем параççĕ, вунă кĕнеке кирлĕ пулсан, 20 кĕнеке параççĕ, анчах та юлашки вуннăшне «нагрузка» вырăнне йышăнмалла иккен, мĕншĕн тесен вĕсем кивĕ кĕнекесем, Союзпичет склачĕсенче вĕсем тахçантанпах выртаççĕ. Паллă: пире çĕнĕ кĕнекесем, паянхи кунпа сыхăннă кĕнекесем кирлĕ. Пирĕн колхозниксем илемлĕ повеçсемпе, поэмăсемпе пĕрлех ялхуçалăх кĕнекисене нумай ыйтаççĕ. Выльăх-чĕрлĕх, хурт-хăмăр ĕрчетесси çинчен вĕрентекен кĕнекесем питĕ кирлĕ. Пире пьесăсемпе юрă кĕнекисем те кирлĕ. Çакна малашне Чăвашгизăн шута илмелле, колхозниксен культурăлла ыйтăвĕсене тивĕçтерме тăрăшмалла.

Николаев юлташ шухăшĕсене Шупашкар районĕнчи библиотекăра ĕçлекен Артемьева юлташ та тĕрĕс тесе çирĕплетет. Вăл ялхуçалăх механизаторĕсем валли комбайнсем, тракторсем, молотилкăсем тата ытти машинăсем çинчен вĕрентекен кĕнекесем çителĕксĕррине палăртать.

— Чăвашсем хушшинчен тухнă рабочисен йышĕ,—тет Шупашкарти пирăвăр комбинатĕнче ĕçлекен библиотекарь Смидович юлташ,—кулленех кунах ӳссе, йышланса пырать. Вĕсен культури те, тавракурăмĕ те тăтăшах ӳсет. Вĕсем нумай пĕлесшĕн, нумай вуласшăн. Пирĕн библиотекăна нумаях пулмасть уçнă, çавăнпа унта кĕнекесем те сахалтарах-ха. Вĕсене эпир сывăх вăхăтрах кирлĕ таран туянăпăр. Техникăлла литература çитмест. Платниксем, çурт сăрлакансем, чул касакансем, арматурщиксем, бульдозеристсем тата ытти рабочисем те хăйсен специальноçĕсем тăрăх çырнă кĕнекесене ыйтаççĕ. Анчах та вĕсене Чăвашкниготорг магазинĕнче те, Союзпичет киоскисенче те тупма çук. Вĕсене Мускавран çырăнса илмелле, çав хушăрах хамăр инженерсен те çырмалла. Ытти республикăсенче малта пыракан рабочисем хăйсен опычĕ çинчен хăйсем кĕнекесем çыраççĕ, çитĕнĕвĕсем çинчен каласа параççĕ. Пирĕн патра вара ку ĕçе йĕркелемен-ха.

Чăвашкниготоргăн Шупашкарти магазинĕнче кĕнекесене подпискăпа сутакан пайра ĕçлекен Орлов юлташ кĕнеке магазинĕсенче ĕçлекенсен культури питĕ çителĕксĕррине палăртать.

— Эпир япăхрах ĕçлетпĕр, япăхрах вĕренетпĕр, кĕнеке илекенсемпе чипер калаçма пĕлместпĕр, — тет вăл.—Çакна пирĕн руководительсем лайăх пĕлеççĕ, лайăх курса тăраççĕ. Анчах та татăклă вырăнсем тумаççĕ, кулленех ертсе пырас вырăнне, пирĕн пата хут ярса тултараççĕ. Районти кĕнеке магазинĕсен заведующийĕсене чĕнсе илмеççĕ, канашлусем сайра хутра кăна пулаççĕ. Инструкцисем парса ларни вăл ĕç тунине пĕлтермест-ха.

— Пирĕн кадрсене,—тет малалла Орлов юлташ,—вĕренме те ниçта та ямаççĕ. Çавăнпа та пирĕн хăшпĕр юлташсем кĕнекене мĕнле çырнине те, вăл мĕнле пичетленсе тухнине те пĕлмеççĕ. Хакламастпăр эпир кĕнекене. Пирĕн ăна вокзалтан час-часах çумăр витĕр турттарса килеççĕ. Çапла вара кĕнекесем пăсăлаççĕ, вĕсене илекенсем те пулмаççĕ. Малашне те капла ĕçлеме пире никам та ирĕк паман. Книготоргпа унăн магазинĕсем хăйсен ĕçне çĕнĕлле йĕркелемелле.

— Юлашки вăхăтра эпĕ чылай районсенче, чылай ялсенче пулса куртăм, — тет Талвир писатель. — Анчах та библиотекăсенче те, кĕнеке магазинĕсенче те чăвашла кĕнекесем питĕ сахал. Уйрăмах пĕлтĕрпе кăçал тухнисем сайра курăнаççĕ. Чăвашгиз кĕнекесене çителĕксĕр кăларать тесе калама пултараймастпăр эпир. Апла пулсан, мĕншĕн вĕсем халăх патне çитмеççĕ-ха? Ответĕ паллă: нумай кĕнекесем Чăвашкниготоргпа Союзпичет тата Чăвашпотребсоюз склачĕсенче е вырăнти кĕнеке магазинĕсен хуралĕсенче выртаççĕ. Чăн та, çав кĕнекесем хушшинче ик-виçĕ çул каярах кăларнисем те пур. Сăмахран, Данилов-Чалдун, Исаев Мĕтри, Я. Ухсай тата ыттисен произведенийĕсем,—вĕсем кирлĕ кĕнекесем, вĕсен хакне те чылай йӳнетнĕ, апла пулин те, асăннă организацисем çав кĕнекесене халăх хушшине çитерме пĕртте тăрăшмаççĕ.

Чăвашпотребсоюз магазинĕсенче вара кĕнеке сутас тĕлĕшпе йĕркелĕх питĕ сахал. Нумай çĕрте кĕнекесене çын курмалла мар тĕттĕм кĕтессене вырнаçтараççĕ, уйрăм сентресем хатĕрлемеççĕ е вĕсене—кĕнекесене—прилавок айĕнче тытаççĕ. Çакă вара кĕнекене пропагандăлани пулать-и?

— Пирĕн халăх кĕнекене хытă юратать, — тет малалла Талвир юлташ. — Мĕншĕн-ха кĕнеке сарас тĕлĕшпе ĕçлекен ответлă çынсем книгоношăсене тупма, вĕсене интереслентерме пĕлмеççĕ? Çук мар, пур вĕсем. Тĕслĕхрен, Октябрьски районĕнче пурăнакан Иванова юлташ хаçат-журнал, кĕнеке сарас тĕлĕшпе питĕ тăрăшса ĕçлет. Мĕншĕн çак ĕçе ытти çынсене явăçтарас мар? Кашни ялта пĕр книгоноша пулсан та, кашни почтальон хăйĕн сумкинче ик-виçĕ кĕнеке чиксе çӳресен те пирĕн кĕнекесем магазинсемпе складсенче выртас çук.

Бибколлектора ытти республикăсемпе облаçсенче пурăнакан чăвашсенчен заказсем нумай килеççĕ. Эпир паллашнă тăрăх, бибколлектор вĕсен ыйтăвĕсене япăх тивĕçтерет. Эпир çак çитменлĕхсемпе ниепле те килĕшме пултараймастпăр.

Чăваш АССР Культура министрĕн ĕçне туса пыракан Капитонов юлташ Чăвашкниготоргпа Чăвашпотребсоюзри ответлă çынсем чăвашла кĕнекене сарас ĕç çине сиелтен пăхнине, ăна çителĕклĕ хакламаннине палăртать. Çакăншăн вăл Шишкинпа Суворов юлташсене хытă критиклет.

— Кĕнеке сарас ĕçри тепĕр çитменлĕх вăл,—тет малалла Капитонов юлташ, — чылай организацисемпе ял Совечĕсем хăйсем валли кĕнеке туянма уйăрнă укçа-тенке вăхăтра илменни е усă курмасăрах хăварни. Паллах, малашне кун пек хăтланни пулмалла мар. Партипе правительство пире культура ĕçне ăнăçлă туса пыма пур майсемпе те пулăшать. Вĕсемпе пирĕн вăхăтра тата туллин усă курас пулать.

Оратор çавăн пекех нумай библиотекăсемпе вулав çурчĕсенче çителĕксĕр вĕреннĕ çынсем ĕçленине тата вĕсен культурине хăпартас тĕлĕшпе тумалли мерăсем çинчен каласа парать, вĕренме, ӳсме тăрăшман работниксем вырăнне нумай пĕлекен кадрсене уйăрса лартма кирли çинчен асăрхаттарать.

Чăваш АССР Сутĕç министрĕ Токарев юлташ Чăваш совет писателĕсен Союзне критиклет.

— Чылай писательсем, — тет вăл,— районсенче пулмаççĕ, литература касăсемпе вулакансен конференцийĕсене иртермеççĕ. Чăваш писателĕсем, аслă Маяковскинчен пример илсе, чăн малтан хăйсем кĕнекен пропагандисчĕсем пулмалла.

Чăваш Совет писателĕсен Союзĕн правлени председателĕ Шумилов (Уйăп Мишши) юлташ пирĕн республикăри хаçатсем çĕнĕ кĕнекесем çинчен рецензисемпе критикла статьясем çаплах çителĕксĕр пичетлесе пыни çинчен каларĕ.

— Пирĕн радио, — тет Уйăп Мишши,—хăйĕн литература передачисенче çĕнĕ кĕнекесем çинчен пĕр сăмах та шарламасть. Çĕнĕ кĕнекесем çинчен районсенче тухса тăракан хаçатсем те пĕлтерӳсем çапмаççĕ. Вулакансем тĕрĕс ӳпкелешеççĕ: эпир мĕнле кĕнеке хăçан тухни çинчен те, унта мĕн çырни çинчен те час-часах пĕлмесĕр юлатпăр, теççĕ. Кĕнекесем халăх хушшине анлă сарăлччăр тесен, пирĕн пичетпе те, радиопа та, литературăлла тĕлпулусемпе те—пур майсемпе те туллин усă курас пулать.

Канашлура мĕн пурĕ 14 çын тухса каларĕ.

Юлашкинчен КПСС Чăваш обкомĕн секретарĕ Ислюков юлташ кĕнеке сарас ĕçри задачăсем çинчен чарăнса тăчĕ.

— Кĕнеке пире çăкăр пек, сывлăш пек кирлĕ. Ăна нимпе те улăштарма çук, — тет Ислюков юлташ, — пирĕн вулакана мĕнле кĕнеке кирлине лайăх пĕлсе тăмалла. Халăха кирлĕ кĕнекесене вăхăтра кăлармалла, вĕсене ун патне вăхăтра çитермелле. Кĕнеке пропагандине уйрăмах вăйлатмалла. Пур майсемпе те усă курас пулать. Кĕнеке сутакансен коммерцилле туртăмне пĕтермелле. Халăха эпир политикăлла, художествăлла, ялхуçалăх, техника, медицина тата ытти ыйтусемпе çырнă литературăна çителĕклĕ парса тăмалла. Халăха коммунизмла воспитани парасси вăл чи пысăк та чи ответлă ĕç. Ăна эпир парти вĕрентнĕ пек туса пымалла. Кĕнеке идеологилле ĕçĕн пĕр пысăк пайĕ пулса тăрать. Апла пулсан, кĕнекене — халăх хушшине!

Советски районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхоз сачĕ 6,5 гектар лаптăк йышăнать. Унта çимĕç кӳрекен улмуççисем 600 ытла. Колхоз пĕлтĕр садпа пахчаран 110 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: И. Г. Гордеев садовод колхоз садĕнче.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Ачасене вĕрентес тата воспитани парас ĕçе вăйлатмалла

(Шупашкар хула Совечĕн сессийĕнчен)

Июлĕн 29-мĕшĕнче ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн тăваттăмĕш сессийĕ пулса иртрĕ. Сесси—хулари шкулсенчи иртнĕ вĕренӳ çулĕнчи вĕрентӳпе воспитани ĕçĕн итогĕсем тата çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленесси мĕнле пыни çинчен сӳтсе яврĕ. Çак ыйтупа хула Совет исполкомĕн çутĕç пайĕн заведующийĕ **Семенова** юлташ доклад туса пачĕ тата хула Совечĕн халăха вĕрентес тĕлĕшпе ялан ĕçлекен комиссин председателĕ **Бурмина** юлташ содоклад турĕ.

Юлашки çулсенче хулара çамрăк ăрăва вĕрентес тата воспитани парас ĕç чылай лайăхланнă. Вăтам тата çичĕ çул вĕренмелли темиçе çĕнĕ шкул уçнă. Кăçал Сосновка поселокĕнче çамрăк рабочисен çĕнĕ вăтам шкулĕ ĕçлеме пуçлать. Çакă пур çамрăксене те вăтам шкула çӳреме май парать.

Халăха вĕрентес ĕç çитес çывăх çулсенче татах та лайăхланмалла. Хулара 3.500 ача вырнаçмалăх тăватă вăтам шкул тумалла. Совхознăй поселок районĕнче 880 ача валли вăтам шкул тума палăртнă. Шкулсенче вĕрентӳпе воспитани ĕçĕ те лайăхланса пырать. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче отличниксен хисепĕ 277 ачаран 573 ачана çитнĕ. 66 учителĕн хăйсем вĕрентекен предметсемпе пĕр начар паллă та çук. Кăçал вăтам шкултан вĕренсе тухнисенчен вунă çамрăк ылтăн медаль, 30 çамрăк кĕмĕл медаль илнĕ. Хулари паллă учительницăсем Н. В. Степанова, А. В. Черпакова, Н. В. Шигаева, Л. Н. Богатырева ертсе пыракан классенче вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайман ачасем пачах пулман.

Анчах хулари шкулсенче вĕрентӳпе воспитани ĕçĕ лайăх пулса пырать теме çук-ха. Вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраймannисем халĕ те сахал мар. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче 974 ача начар паллăсем илнĕ. Ун пек ачасем уйрăмах 11-мĕш, 6-мĕш, 22-мĕш вăтам шкулсенче нумай пулнă. Хăшпĕр шкулсенче вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисен хисепĕ ӳснĕ. Çакă вăл шкул директорĕсем учительсен коллективне тивĕçлипе ертсе пыманнинчен, вĕсен ĕçне куллен тĕрĕслесе тăманнинчен килнĕ.

Çамрăк рабочисен вăтам шкулĕсенче те вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраймannисем нумай. Цех начальникĕсемпе предприятисен руководителĕсем шкула çӳрекен рабочисене вĕренме кирлĕ условисем туса парассишĕн куллен тăрăшмаççĕ.

Учительсем хушшинче вĕренекенсен пĕлĕвне тĕрĕс мар хаклас йăла халĕ те пĕтмен. Вырăнсăрах лайăх е начар паллă лартнă тĕслĕхсем чылай шкулсенче тĕл пулаççĕ. Çак киревсĕр йăлана пĕтерес тĕлĕшпе хулари çутĕç пайĕ тивĕçлипе кĕрешмест.

Уйрăм предметсене вĕрентес тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пур. Биологи, хими, физика предмечĕсене вĕрентнĕ теорие практикăлла ĕçпе çыхăнтарма тăрăшмаççĕ. Рисовани, черчени, физкультура ĕçне вĕрентесси начар пулса пырать.

Вĕрентӳпе воспитание лайăхлатас тĕлĕшпе шкулсенчи комсомол тата пионер организацийĕсем те тивĕçлĕ вырăна йышăнман-ха. Сăлтавсăрах шкула çӳремен, дисциплинăна пăснă, хăйсене йĕркесĕр тытнă тĕслĕхсем халĕ те нумай. Шкулпа ачасен ашшĕ-амăшĕсем хушшинчи çыхăну çителĕксĕр.

Ачасене коммунизмла воспитани парас ĕç çителĕксĕр пулса пыни педагогика коллективĕсенче критикăпа самокритика çуккинчен нумай килет. Хăшпĕр учительсем пĕр-пĕрин çитменлĕхĕсене кăтартса пама хăраççĕ, хăйсен йăнăшĕсене йышăнмаççĕ. Педагогика совечĕсемпе производствăлла канашлусем ячĕшĕн кăна пулаççĕ. Вĕсене пĕр-пĕр учитель отчет туса панипех ирттерсе яраççĕ. Ĕçе тĕплĕн тишкерсе анализ туни çук. Критикăпа самокритикăна хĕснĕ тĕслĕхсем те сахал мар пулнă.

Хулари шкулсенче çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕç кирлĕ пек пулса пымасть-ха. Юсама палăртнă шкул çурчĕсене паянхи куна юсаса çитермен. «Ремстройконтора» шкул çурчĕсене юсас тĕлĕшпе графика пурнăçласа пымасть. Шкулсенче çĕнĕ кабинетсем тăвас, вĕренекенсене классем тăрăх тĕрĕс вырнаçтарас тĕлĕшпе пысăк чăрмавсем пур. Учебниксемпе наглядлăй пособисем тата шкул ачисене кирлĕ хатĕрсем илсе килсе сутас ĕç тивĕçлипе пулса пымасть. Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе суту-илӳ организацийĕсем питех те вăрах ĕçлеççĕ.

Докладсем тăрăх тухса калакансем хулари шкулсенче вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе чылай паха сĕнӳсем пачĕç.

— Сосновка поселокĕнчи шкулсенче кăçал икĕ пин ытла ача вĕренмелле,—тет **Миронов** депутат.—Шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленсе çитрĕç. Анчах пирĕн поселокра учебниксемпе наглядлăй пособисем сутас ĕçе йĕркелемен. Шкулпа вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсен хушшинчи çыхăну çителĕксĕр. Çавна пула ачасен дисциплини начар. Хулари çутĕç пайĕнче ĕçлекенсем шкулсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе поселок Совечĕпе çыхăнса ĕçлемеççĕ.

Хулари 4-мĕш вăтам шкул директорĕ **Ижойкин** юлташ шкулсенче вĕрентӳпе воспитани ĕçĕ çителĕксĕр пулса пынишĕн чи малтан учительсем айăпли çинчен калать.—Шкулта тата шкул тулашĕнчи ĕçсене чылай вăйлатмалла. Педагогика пропагандине, учительсен ĕçне куллен тĕрĕслесе тăрассине лайăхлатмалла. Ачасене воспитани парас ĕçшĕн ашшĕ-амăшĕсен ответлăхне ӳстермелле.

— Хăшпĕр шкулсенче тĕрлĕ кабинетсемпе наглядлăй пособисем çитмеççĕ, — тет **Сергеева** депутат.—Пур приборсем те паянхи малта пыракан техникăпа çыхăнса тăмаççĕ. Çав приборсемпе пирĕн çĕршыври малта пыракан техникăна кăтартма çук. Наглядлăй пособисем сутакан магазин начар ĕçлет. Çутĕç министерствипе хулари çутĕç пайĕ шкулсене сахал пулăшаççĕ. Кирлĕ вăхăтра тĕрĕслесе пулăшни çук.

Прениre çавăн пекех «Ремстройконтора» начальникĕ **Самохин**, **Татаркин** депутат, ачасен больницин главнăй врачĕ **Молчанова**, **Дмитриев** депутат, Чăваш АССР Çутĕç министрĕн заместителĕ **Иванов** юлташсем сăмах туса каларĕç.

Сӳтсе явнă ыйту тăрăх сесси тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Çĕрпӳ районĕнчен килнĕ хыпарсем

Машина паркĕ ӳсет. МТС çулсерен çĕнĕ тракторсемпе, комбайнсемпе тата ытти машинăсемпе пуянланса пырать. Кăçал кăна кунта самоходнăй комбайнсем 5, тракторсем 5 тата ытти ялхуçалăх машинисемпе инвентарь илсе килнĕ. Халĕ колхозсен уйĕсенче 69 трактор, 23 комбайн, 18 сложнăй молотилка, темиçе вуншар жнейкăсемпе косилкăсем ĕçлеççĕ.

Тимĕр-тăмăр пухаççĕ. Районти ĕçсыннисем иртнĕ уйăхра кăна 39 тонна тимĕр-тăмăр пухрĕç. Ку ĕçе уйрăмах шкул ачисемпе колхоз çамрăкĕсем активлăн хутшăнаççĕ.

«Коммунар» тата «1905 çул» колхозсенче кĕске вăхăт хушшинче 3,5—4 тонна тимĕр-тăмăр пухса панă.

Колхозра водопровод. Хрущев ячĕпе тăракан колхозра фермăсем патне водопровод хывас ĕç вĕçленсе пырать. Часах трубасем тăрăх пĕр километртан таса шыв пыма пуçлать.

Пир тĕртекенсен канăвĕ. Пир-авăр фабрикинче ĕçлекенсем çулсерен отпуск вăхăтĕнче курортсемпе канмалли çуртсене каяççĕ. Кăçал профсоюз комитечĕн путевкисемпе кăна 25 çын курортсемпе санаторисенче тата канмалли çуртсенче пулаççĕ, вуншар çын экскурсисене кайнă.

Кашни кун 15 пин тӳме. «Перламутр» артельти тӳмесем тăвакан цех коллективĕ куллен вăтам шутпа 15—16 пин тӳме туса кăларать. Юлашки виçĕ уйăх хушшинче 1.770 пин ытла тӳме туса кăларнă, II-мĕш квартал планне чылай ирттерсе тултарнă.

„Ленин литература çинчен"

ВАРШАВА, июлĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăри «Книга и знание» издательство «Ленин литература çинчен» ятлă сборнике тăваттăмĕш хут пичетлесе кăларнă. Ку кĕнекене В. И. Ленин литература пирки çырнă статьясене, тухса калаçнă сăмахсене тата çырусене кĕртнĕ.

Болгарире налогсене чакарнă

СОФИЯ, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари Министрĕсен Совечĕ сĕннипе Халăх Пухăвĕн Президиумĕ пĕтĕм тупăшран илекен налог çинчен калакан закона улшăнусем кĕртесси çинчен Указ кăларнă. Çав Указ тăрăх уйрăм хуçалăхлă хресченсен тупăшĕсенчен, çавăн пекех çĕрĕç кооперативĕсен членĕсен, рабочисемпе служащисен хăйсен хуçалăхĕсенчи тупăшĕсенчен илекен налогсене чылай чакарнă.

Ирĕклĕ профессипе пурăнакан çынсен тупăшĕсенчен илекен налогсем те чакаççĕ.

Корейăри перемири пирки

ПЕКИН, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Корейăри фронтран июлĕн 29-мĕшĕнче пĕлтернĕ хыпарта çапла каланă:

Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсем çарсем тăма юраман вырăнтан тухма пуçланă.

Центральнăй фронтра, Пукханген юханшывĕнчен хĕвеланăçнерехре тата Кимсоран кăнтăртарахра, Корейăпа Китайăн транспорт чаçĕсем, Корейăпа Китай халăх çарĕсен малти позицийĕсенчен çар хатĕрĕсене илсе тухса, çарсем тăма юраман вырăнтан çурçĕр енчи çĕнĕ позицисем çине куçарма тытăннă. Çав вăхăтрах Корейăпа Китай халăх çарĕсен хăшпĕр чаçĕсем те çарсем тăма юраман вырăнтан чакма пуçланă.

ПЕКИН, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Корейăри фронтран çапла пĕлтернĕ:

Корея Халăх çарĕн Верховнăй командующийĕ Ким Ир Сен маршал тата Китай халăх добровольцĕсен командующийĕ Пын Дэ-хуэй генерал панă приказа пурнăçласа, Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем пурте Корейăри перемири çинчен тунă килĕшӳ вăя кĕнĕренпе 72 сехет хушшинче çарсем тăма юраман вырăнтан тухнă.

ЛОНДОН, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Сеул хулинчен çапла пĕлтерет:

Пĕрлешнĕ нацисен çарĕсен мĕнпур чаçĕсем июлĕн 30-мĕшĕнче, вырăнти вăхăтпа 22 сехетре, перемири çинчен тунă килĕшӳре каланă пек, çарсем тăма юраман вырăнтан каялла чакни çинчен 8-мĕш çарăн штабĕ паян каçхине пĕлтернĕ.

Çарсем пурте каялла йĕркеллĕ чакнă, тенĕ штаб представителĕ.

ДЕМОКРАТИЛЛĔ КОРЕЯ ХАЛĂХ РЕСПУБЛИКИНЧЕ АМНИСТИ ÇИНЧЕН УКАЗ КĂЛАРНĂ

ПХЕНЬЯН, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Ирĕклĕхшĕн Америка интервенчĕсене хирĕç пынă отечественнăй вăрçăра çĕнтерӳ тунă май Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Аслă Халăх пухăвĕн Президиумĕ амнисти парасси çинчен Указ кăларнă. Указ тăрăх, суд виçĕ çултан каярах срока тĕрмене хупмалла тунă пур çынсен, çавăн пекех тата тĕрмене лартман, урăхла майпа наказани памалла тунă пур çынсен айăпĕсене те каçарнă.

Вунă çул тултарман ача амăшĕсен, йывăр çын хĕрарăмсен, 18 çул тултарман хĕрарăмсен тата сиплеме май çук чирпе чирлисен айăпĕсене пĕтĕмпех каçармалла тунă. Тĕрмене виçĕ çултан ытларах срока хупмалла тунă çынсен лармалли срокне çурри чакарнă.

Халиччен пуçарнă ĕçсем тăрăх, çак Указра каланă пек, виçĕ çуллăх срокран каярах хупма суд тумалла пулсан, çав ĕçсене пурне те чарса лартаççĕ. Амнисти панă çынсен документĕсем çине вĕсене маларах суд туни çинчен паллă тумаççĕ. Вĕсене пурне те суйлав прави параççĕ.

Государствăна хирĕç преступлени тунăшăн, вăрланăшăн, усал шухăша пурнăçлас тĕлĕшпе çынна вĕлернĕшĕн, суя укçа тунăшăн виçĕ çултан ытлараха тĕрмене хупмалла тунă çынсене амнисти памаççĕ.

Мир вăйĕсен çĕнтерĕвĕ

ПРАГА, июлĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Корейăра перемири пирки килĕшӳ туса алă пусни çинчен пĕлтерекен хыпара Чехословаки халăхĕ питех те хавасланса тата савăнăçлăн кĕтсе илнĕ. Паян пур хаçатсем те СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков Ким Ир Сен патне янă телеграммăна пичетленĕ. «Руде право» хаçат çак историллĕ событи çинчен çырнă умстатьяра çапла калать: килĕшӳ туса алă пусни ку вăрçа организацилекенсем хăйсен тĕллевне пурнăçлайманни çинчен калать. Перемири пирки килĕшӳ туса алă пусни вăл пĕтĕм тĕнчери мир вăйĕсен аслă çĕнтерĕвĕ пулать.

— Пирĕн халăх,—тесе çырать «Руде право» хаçат,—Корейăн паттăр халăхне пĕтĕм чун-чĕререн саламлать. Корейăра вăрçă пуçланнăранпах пирĕн халăх яланах чыслăхпа тĕрĕслĕхшĕн кĕрешекенсем майлă, агрессие хирĕç паттăр кĕрешекенсем майлă пулни çинчен пĕлтерсе тăчĕ.

Ким Ир Сен маршала Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Геройĕ ятне панă

ПХЕНЬЯН, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Корейăн центральнăй телеграф агентстви Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Аслă Халăх пухăвĕн Президиумĕ Указ кăларни çинчен пĕлтернĕ. Указра Ким Ир Сен маршала Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Геройĕ ятне пани çинчен каланă.

Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Аслă Халăх пухăвĕн Президиумĕ, тенĕ Указра, Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Министрĕсен кабинечĕн председательне, Корея Халăх Çарĕн Верховнăй командующине—Ким Ир Сен маршала Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Геройĕ ятне панă, Государство ялавĕн пĕрремĕш степень орденĕпе тата «Ылтăн çăлтăр» медальпе наградăлама йышăнать. Вăл ирĕклĕхшĕн пынă отечественнăй вăрçăра, тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн, Америка интервенчĕсене хирĕç пынă тĕрĕслĕхлĕ вăрçăра пĕтĕм Корея халăхне организацилесе ертсе пычĕ, Корея халăхĕн паттăр çарне ăслăн ертсе пынипе Корея халăхне çĕнтерӳ тума май пачĕ.

Пын Дэ-хуэй генерала Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Геройĕ ятне панă

ПХЕНЬЯН, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Корейăн центральнăй телеграф агентстви Китай халăх добровольцĕсен командующине Пын Дэ-хуэй генерала, Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Аслă Халăх пухăвĕн Президиумĕн Указĕ тăрăх, Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Геройĕ ятне пани çинчен пĕлтернĕ.

Китай халăхĕ Америка агрессине хирĕç тата Корейăна пулăшассишĕн тăракансен юхăмĕн таса та чыслă ялавне çĕклесе, Корейăри фронта Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсене ячĕ, тенĕ Указра. Америка интервенчĕсене хирĕç, ирĕклĕхшĕн пынă Корея халăхĕн тĕрĕслĕхлĕ вăрçинче Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем хăйсен юнне юхтарса çапăçрĕç, çапла майпа пирĕн халăха тăшман тапăнăвĕсене сирсе яма тата çĕнтерӳ тума пулăшрĕç. Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Аслă Халăх пухăвĕн Президиумĕ Китай халăх добровольцĕсен командующине Пын Дэ-хуэй генерала пирĕн халăхăн ирĕклĕхшĕн пынă отечественнăй вăрçинче тăшмана çĕнтерессишĕн кĕрешнĕ çĕрте уйрăмах паттăр ĕçсем тунăшăн Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Геройĕ ятне пама, Государство ялавĕн 1-мĕш степень орденĕпе тата «Ылтăн çăлтăр» медальпе наградăлама йышăнать.

Çамрăксен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕнче

БУХАРЕСТ, июлĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Демократиллĕ çамрăксен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн Совечĕн ларăвĕ хыççăн, каçхине конгресăн юлашки ларăвĕ пулнă. Унта Демократиллĕ çамрăксен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн ертсе пыракан органĕсен çĕнĕ составне çирĕплетнĕ. Председатель пулма Бруно Бернини (Итали), генеральнăй секретарь пулма Жак Дени (Франци) суйланнă.

Демократиллĕ çамрăксен Пĕтĕм тĕнчери Федерацийĕ çамрăксен пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш конгресĕ пулнăранпа тунă ĕçсем çинчен тата çамрăксен миршĕн, хăйсен прависемшĕн кĕрешес ĕçри задачисем çинчен резолюци йышăннă. Ку резолюцие пурте пĕр шухăшлă пулса ырланă.

Çамрăксен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕ ун хыççăн тĕнчери çамрăксене чĕнсе калани йышăннă.

Жак Дени юлашки сăмах каланă хыççăн Çамрăксен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕ хупăннă. Залра «Демократиллĕ çамрăксен гимнĕн» кĕвви янăранă. Миршĕн, туслăхшăн, хăйĕн прависемпе телейлĕ пуласлăхĕшĕн çамрăк ăрăвăн пĕрлешсе кĕрешмелли çинчен чĕнсе каланисене нумайччен тăвăллăн алă çупса ырланă.

Ирĕксĕрлес тата вăрçас политикăна калаçусем ирттермелли политика çĕнтертĕр тесе пĕрлешмелле! Пĕрлешмелле! Тата тачăрах пĕрлешмелле!

Çамрăксен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕ тĕнчери çамрăксене чĕнсе калани

БУХАРЕСТ, июлĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Çамрăксен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕ тĕнчери çамрăксене чĕнсе калани йышăннă. Унта çапла каланă:

— Çамрăк арçынсемпе хĕрсем! Сире Çамрăксен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕн ĕçне хутшăннă 106 çĕршыври çамрăксен организацийĕсемпе çамрăксен представителĕсем чĕнсе калаççĕ.

Демократиллĕ çамрăксен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ чĕннипе эпир Бухарестра тĕл пултăмăр, ирĕклĕ дискуссисем пынă вăхăтра пирĕн вăхăтри мĕнпур çамрăксене хумхантаракан ыйтусем тăрăх хамăр шухăшсемпе пĕр-пĕрне паллаштартăмăр.

Кашнин хăй ĕненекен шухăшĕ ăрасна пулсан та, эпир çамрăксен тĕрлĕ организацийĕсен представителĕсем пулсан та, пирĕн ĕмĕтсемпе интересsем пĕр пек.

Эпир пурте çапла тăвасшăн: мĕнпур национальноçсен, мĕнпур расăсен çамрăкĕсен çамрăклăхри çулсенче ыранхи кун пирки шикленмелле ан пултăр;

кашнин хăйне валли пурăнмалăх ĕç укçи тупма, тивĕçлĕн пурăнма ĕç тата специальность пултăр;

кашни хăйĕн пултарулăхне тата ăстăнне аталантарса вĕренме тата канма, хăйĕн сывлăхĕпе вăйĕсене çирĕплетме пултартăр;

кашнин çемьеллĕ пулма кирлĕ майсем чăннипех те пулччăр, кашни мирлĕ те телейлĕ пурăнма пултартăр;

кашнин хăйĕн çĕршывĕн социальнăй тата политикăлла пурнăçне хутшăнма право пултăр.

Çамрăксем! Пирĕн ĕмĕтсем пурнăçа кĕччĕр тесен, пирĕн мĕн тумалла-ха?

Пĕрлешмелле! Пĕрлешмелле! Тата тачăрах пĕрлешмелле!

Мĕнпур çĕршывсенчи тата мĕнпур халăхсен çамрăкĕсен тăванла тата мирлĕ союзĕ вăл çамрăк ăру ыйтнисене тата унăн ĕмĕчĕсене пурнăçлассишĕн кĕрешес ĕçри хăватлă вăй пулса тăрать.

Чăннипех туслă пурăнас тесен, пĕр-пĕрне лайăх пĕлни кирлĕ. Тĕрлĕ çĕршывсенчи çамрăксем культура ĕçĕсем енĕпе тата спорт енĕпе анлă çыхăнусем тытма пултарччăр тесе, пĕтĕм вăя хурса тăрăшар. Пире пĕр-пĕринчен уйăрма тăшман усă куракан пур чăрмавсемпе хирĕçӳсене те сирсе ярар.

Телей правине, савăнăç правине хӳтĕлеме пĕрлешер, усал тăвакан вăйсен çулне пӳлсе лартма пĕрлешер!

Вăрçă, васкасах хĕçпăшалланни, урăх çĕршыва пăхăнса тăма тивни çамрăксен прависене пурнăçлас ĕçшĕн хăрушлăх туса хурать, этемлĕх прогресс патнелле кайса пыни вара çав правăсене пурнăçлама лайăхрах майсем туса парать.

Вăрçă вăл—миллионшар çамрăк çынсен вилĕмĕ, вăл—арканса юлнă пурăнмалли çуртсем, вăл—ĕмĕтсем путланса ларни.

Васкасах хĕçпăшалланни вăл—шкулсем вырăнне линкорсем, çуртсем вырăнне вĕçекен крепоçсем туни, вăл—чечекленекен уй-хирсем пулмалли вырăнсенче бетонран çар базисем туни.

Урăх çĕршыва пăхăнса тăни вăл—тăван çĕршыва çаратни, çамрăк çынсем хăйсен тăван çĕршывĕсенчех урăх çĕршыв çыннисен аллинче чуралăхра пулни.

Çамрăк арçынсемпе хĕрсем!

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ çĕршывсем хушшинчи тавлашуллă ыйтусене мирлĕ майпа йĕркелессишĕн, хальхи вăрçăсене пурне те чарса лартассишĕн, урăх çĕршывсене пăхăнса тăракан халăхсене хирĕç тăвакан агрессиллĕ ĕçсене пурне те чарса лартассишĕн пĕтĕм тĕнчипе кампани ирттерес ĕçе пуçарчĕ. Эпир сире çав кампание хăвăра тивĕçлĕ мĕнпур хастарлăхпа хутшăнма чĕнетпĕр.

Кам калаçусем ирттерме чарать, кам пĕр-пĕрне ăнланса илнипе калаçса татăлассине чарса тăрать, кам сăмахпа калаçса ыйтусене йĕркелес вырăнне тупăсемпе персе ыйтусене йĕркелессишĕн тăрать, çавсене пурне те пысăк хастарлăхпа тăрă шыв çине кăларар.

Эпир çапла тума çине тăрса ыйтма кирлĕ тесе шутлатпăр: кашни халăх, пысăк йышли те, пĕчĕк йышли те, çĕр чăмăрĕн кирек хăш пайĕнче пурăнаканĕ те, хăйĕн пурнăç йĕркине хăй суйласа илме пултартăр, çав вăхăтрах ытти халăхсем хăйсен ирĕкĕпе суйласа илнĕ пурнăç йĕркисене хисеплетĕр. Калаçусем ирттернипе ыйтусене татса парас шухăш тĕнчери лару-тăрури йывăрлăхсене çăмăллатма пуçларĕ. Çав шухăш пирĕн чĕресенче пуласлăха шанса тăрассине çирĕплеттĕр, çав шухăш вара усал шухăша, ирĕксĕрлес тата вăрçас шухăша çĕнтертĕр.

Корейăра перемири туни çинчен пĕлсен, пĕтĕм тĕнчери çамрăксем хытă савăнчĕç. Корейăра перемири туни тавлашуллă ыйтусене пурне те мирлĕ майпа, калаçусем ирттернипе йĕркелеме май пуррине кăтартса парать.

Хамăрăн çамрăк вăя мирĕн пархатарлă ĕçĕшĕн кĕрешмешкĕн пама пĕрлешер, халăхсен калаçусем ирттерессишĕн, ыйтусене пĕр-пĕрне ăнланнипе йĕркелессишĕн тата миршĕн кĕрешмелли юхăмне хутшăнар!

Çавăншăн кĕрешме чĕнетпĕр эпир сире, пиччĕсемпе шăллăмсем, аппасемпе йăмăксем, туссемпе юлташсем!

Пĕрлĕхлĕ пулнипе мир патне!

Мир тунипе телейлĕ пурнăç патне!

Тĕнчери çамрăксем, малалла! Мирпе туслăхшăн, малашнехи çутă пуласлăхшăн!

АФГАНИСТАНРА СОВЕТ ФИЛЬМĔСЕНЕ КУРМА ХАЛĂХ ЙЫШЛĂН ÇӲРЕТ

КАБУЛ, июлĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Кабулра Совет Союзĕнче ӳкернĕ «Повесть о настоящем человеке» тата «На арене цирка» кинофильмсене кăтартаççĕ. Çак фильмсене курма халăх нумай çӳрет. «На арене цирка» фильма «Кабул» кинотеатрта темиçе хутчен те кăтартнă пулнă. Анчах халăх ыйтнипе çав фильма çĕнĕрен кăтартма пуçланă.

„Ялав" журналăн çĕнĕ номерĕ

Чăваш совет писателĕсен Союзĕ кăларакан «Ялав» журналăн 6-мĕш номерĕ пичетленсе тухрĕ.

Журнал «Юрă уявĕ» ятлă статьяпа пуçланать. Малтанхи страницăсенче «Уяв юрри» (А. Петров музыки, Ю. Скворцов сăвви), «Тантăшсемĕр, карталанăр» (Ф. Лукин музыки, А. Эсхель сăвви) тата «Лагерьти вăйă юрри» (А. Тогаев музыки, Н. Васянка сăвви) юрăсене пичетленĕ.

Çĕнĕ номерте Степан Павловăн «Сан валли, Çĕршывăмăр!», Иван Григорьевăн «Вĕлле хурчĕ—ылтăн хурт» тата Н. Ильбекăн «Çавал таврашĕнче» очеркĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Василий Долговăн «Кăранташ халапĕ» калавĕ пичетленнĕ.

Вырăс писателĕсен произведенийĕсенчен А. М. Горькин «Итали юмахĕсем» ятлă циклĕнчен илнĕ «Пепе» ятлă юмахĕ тата В. В. Маяковскин «Эпĕ Америкăна уçни» произведенин малалли сыпăкĕ пур. «Çамрăксен сасси» страницăра Георгий Орлов, Михаил Львов, Валентин Васильев, Борис Тихонов çамрăк авторсен сăввисем пичетленнĕ. Журналта çавăн пекех «Россия» дизельэлектроходăн пĕрремĕш рейсĕ çинчен, «Ялав» журнала пăхса тухни çинчен çырнисем пичетленнĕ.

Малта пыракан колхозра пулчĕç

ЧКАЛОВСКИ. «Гвардеец» колхоз—республикăра малта пыракан колхозсенчен пĕри. Колхоз ĕçĕпе паллашма унта чылай колхозсенчен экскурсие пыраççĕ. Нумай пулмасть унта Елчĕк районĕнчен колхоз председателĕсемпе колхозсенчи пуçламăш парторганизаци секретарĕсем пычĕç. Вĕсем малтанах колхозра строительство ĕçĕсем мĕнле пынипе паллашрĕç. Унтан колхозри вылăх фермисене курса çӳрерĕç, унта ĕçлекен колхозниксемпе курса калаçрĕç. Хăнасем колхозăн анлă хирĕсенче пулчĕç. Колхоз агрономĕ А. Ефимов тата колхоз председателĕ М. Долгов колхоз членĕсем вăйлă тырпулшăн мĕнле кĕрешни çинчен тĕплĕн каласа пачĕç. Елчĕк районĕнчен килнĕ хăнасем «Гвардеец» колхозăн ĕçри лайăх опычĕсене хăйсен колхозĕсенче пурнăçлама сăмах пачĕç.

И. ПЫРКИН.

ТЕХНИКАЛЛА ФИЛЬМСЕН КИНОФЕСТИВАЛĔ

УЛАТĂР. Чугун çул работникĕсен кунне хатĕрленнĕ май клубсемпе хĕрлĕ кĕтессенче тата ытти тĕрлĕ культурăпа çутĕç учрежденийĕсенче техникăлла фильмсен кинофестивальне ирттереççĕ. Кашни сеанс умĕн лекцисем вуласа параççĕ. Ку ĕçе пысăк квалификациллĕ инженерсем, производство новаторĕсем хутшăнаççĕ.

Чугун çул узелĕнче ĕçлекенсем «Новая техника на железнодорожном транспорте» тата ытти кинофильмсене те юратса пăхрĕç. Çав темăсем тăрăх тунă лекцисене тимлĕн итлерĕç. Кинофестивале пынă чугун çул работникĕсем хăйсен ĕç меслечĕсем çинчен те каласа параççĕ.

Техникăлла кинофильмсен фестивальне лайăх ирттерес тĕлĕшпе чугун çул узелĕнчи техникăлла библиотека та паха ĕç тăвать. Вăл техникăлла литературăсенчен куçса çӳрекен выставка тунă, выставкăсемпе витринăсем йĕркеленĕ.

З. ШАЛАЕВА.

ПАЯН «СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ» ХАÇАТРА

Коммунизмăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем патне («Правда» хаçатăн июлĕн 31-мĕшĕнчи умстатьи).

Корейăра перемири тума алă пуснă май Ким Ир Сен юлташ Г. М. Маленков юлташ патне тата Ли Дон Ген юлташ В. М. Молотов юлташ патне янă телеграммăсем.

Мускаври парторганизаци активĕн Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ аллă çул тултарнă ятпа пулса иртнĕ пухăвĕ.

Шупашкар хулинчи парти активĕн пухăвĕ çинчен.

Комбайнсемпе тата жнейкăсемпе туллин усă курар!

Австрипе государство договорĕ тăвас ыйту пирки.

Австрие тумалли государство договорĕ çинчен Совет Правительстви Франци, США тата Англи правительствисене панă нота.

Урăх çĕршывсенчен килнĕ хыпарсем.

ФЕЛЬЕТОН. А. Кузьмин. — «Тупăшлă рейс».

Редактор заместителĕ М. Н. ЯКИМОВ.

ТЕАТР

МАРИ АССР-ĕнчи ШКЕТАН ЯЧĔПЕ ТĂРАКАН ВЫРĂСЛА ДРАМА ТЕАТРĔН ГАСТРОЛĔСЕМ. Чăваш академи театрĕнче—августăн 1-мĕшĕнче «Грушенька».

Спектакль 20 сехет те 30 минутра пуçланать.

КИНО

«РОДИНА»—августăн 1-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче «Волочаевские дни», ытти сеанссенче çĕнĕ фильм-спектакль «Егор Булычев и другие». Пĕрремĕш сери 16 тата 20 сехетре, иккĕмĕш сери 18 сехет те 15 минутра тата 22 сехетре пуçланать.

УХУТА СРОКĔСЕМ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР территорийĕнче шывра ишекен, шурлăхра пурăнакан вĕçен кайăксене çуллахи тата кĕркунехи вăхăтра 1953 çулхи августăн 2-мĕшĕнчен пуçласа тытма юрать.

Кăраксемпе пăчăрсене тытма, çавăн пекех кăвакалсене тилĕ е мулкач хăвалакан йытăсем пулăшнипе тытма чарнă.

Чăваш АССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин Ухута хуçалăх пайĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-04, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НГ 01196 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Тираж 20.000 экз.